Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ОКТЯБӖР 20 КĔÇНЕРНИКУН 242 (5055) №

ЧĂВАШ КОММУНӖ

21-мӗш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомӗпе Чăваш АССР Верховнăй Совечӗн хаçачӗ Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнăç пайӗн—0—85, ялхуçалăх пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышлĕннăç пайӗн—7—97, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнăйӗн — 6—23.

Ялти интеллигенци çине тимлӗрех пăхар

Ялта колхоз строй туни революцилӗ пысăк переворот пулчӗ. Ку переворот ялхуçалăх производствине çеç тивмест. Хуçалăхăн формипе ӗç меслечӗсем тӗпрен улшăнни ялти пӗтӗм обчăлăхпа культура йӗркисенче тӗпрен улшанусем турӗ. Коллективизаци çӗнтернипе тата чи нумай йышлă експлуататăрла класа—кулаксене пӗтернипе—совет хресченӗсене политикăпа культура енчен ӳсме пысăк майсем уçăлчӗç. Ялхуçалăхне анлăн пырса кӗнӗ çӗнӗ техника ялăн ӗмӗрхи сăнсăпатне хăвăрттăн улăштарчӗ, хатӗрленнӗ кадрсем ыйтрӗ, хулан йертсе пыракан рольне ӳстерчӗ.

Колхоз ялӗ культура енчен ӳссе пыни, чăн малтан, ялти интеллигенци кадрӗсем ӳсниче курăнса тăрать. Ялхуçалăх производствин социалисăмлă форми ялти интеллигенци йышне аслăлатассине обязательнăй услови туса хурать, мӗншӗн тесен, социалисăмлă çӗнӗ техника, пурпӗрех культурăлă çӗнӗ професçисем пуçланмала тăвать, вăл хуçалăха тытса пыма, ăна планлама, продукцине учот туса пыма, т. ыт. тума пӗлекен кадрсем ыйтать.

Ӗлӗкхи, революциччĕнхи ялти интеллигенци йышне пӳрне вӗççӗн те шутласа кăларма пулнă. Ку вăл—мӗскӗн пурнăçпа пурăнакан учитӗл, ку вăл—врач, участкăри фельдшер, земски агроном, яла хутран-ситрен пырса тухакан землемер пулнă. Пӗтӗм интеллигенци çак çеç пулнă! Интеллигенцин ролӗ чаплах пулман. Вăл халăх ӗçне тӳрӗ кăмăлпа туса пыма тăрăшни, часчасах, хайар чăнлăх умӗнче ванса саланнă.

Вăтам шкулта вӗрентекен учитӗл Бабенко юлташ (Лозовски район, Харькăв облаçӗ) хăй ӗлӗкхи вăхăтра учитӗл пулса мӗнле ӗçлени çинчен çапла каласа парать: „Вăл явăр çулсем вăхăтӗнче ялти ятлă çынсем—поп, урядник, кулак—учитӗл çине йӗрӗнсе пăхнă, янтипе тăранса пурăнакан çын вырăнне хунă. Чуна лăплантараканни пӗртен пӗр ачасем пулнă. Уроксем пӗтсен, ачасем шкула юлаччӗç, вӗсем вара мана хăйсен ӗмӗчӗсем, малашнехи планӗсем çинчен каласа параччӗç. Вӗсен планӗсем пысăках пулман. Чылайӗшӗ малала вӗренме кайасшăнччӗ, анчах ку çул вӗсемшӗн хупă пулнă. Ачасенчен виççӗмӗш класран вӗренсе тухма пултаракансем те сахалччӗ. Пӗрисем хӗл каçаччен çӳреççӗ те, тепӗр çулхине çӳреме пăрахаççӗ—атти çӗтӗлнӗ, урине нимӗн тăхăнма çук. Тепӗрне ашшӗ-амăшӗ батрака ярать. Виççӗмӗшне ашшӗ тӳррех калать: „Пӗр çул вӗрентӗн—çитет, мужике хут вӗренни мӗне кирлӗ?“... Вăл вăхăтсенче мӗн чухлӗ нумай пултарулă ачасен хăйсен таланчӗсене çӗр айне варса хумалине аса илетӗн те, кичем пулса тăрать“.

Çак савăнăççăр картинă ӗмӗрлӗхе кайа тăрса юлчӗ. Совет влаçӗ, колхозсем—халăх таланчӗсене чечеклентерсе ӳстерекен пархатарлă никӗс пулчӗç. Ӗнерхи колхозниксем пайан учителсем, агрономсем, врачсем, летчиксем, инженерсем, механиксем пулса тăраççӗ. **Ял колхоз никӗсӗ çинче аталанса питех те хăвăрттăн кадрсем ӳстерсе пырать.** Вӗсем кунсерен мар, халăхăн аслă творчӗствăлă вăйӗсене палăртса сехетсерен ӳссе пыраççӗ. Ӗлӗкхи тӗттӗм вырăнсем пӗтӗмпех урăхла пулса тăчӗç. „Ял“ сăмахăн ăнланăвӗ те улшăнчӗ. Кунта культурăлă пурнăç çăлкуçӗ пек тапса тăрать. Çакна асăнни те çителӗклӗ пулмала: хальхи вăхăтра ялта темиçе çӗршер пин учителсем, агрономсем, врачсем, çӗрйӗркелекенсем, техниксем, совет служащисен нумай йышлă çарӗ ӗçлет.

Кирек хăш яла ил, вăл ялти интеллигенци хăвăрттăн ӳссе пынине, унăн ролӗ пысăкланнине кăтартать. Рязань облаçӗнчи пӗр Сасов районӗнче кăна, ӗлӗк кайа юлнипе паллă пулнă вырăнсенче, халӗ 474 учитӗл, 36 агроном, медицинă работникӗсем 75, служащисем 1000 çын ытла ӗçлеççӗ.

Иванăвă облаçӗнчи Александровски районӗнчи колхозсемпе ялсенче 370 учитӗл, медицинă работникӗсем 26, зоотехниксем 13, агрономсем 17, ветеринарнăй врачсемпе фельдшӗрсем 52, çӗрйӗркелекенсем 11, вуншар избачсемпе библиотекăрсем, кооперацире, почтă уйрăмӗнче, ялсоветсенче, перекет кассисенче, МТС-ра, радиоузӗлра, телефон станцинче çӗршер служащисем ӗçлеççӗ.

Колхоз хуçалăхӗ ӳсни совет аппаратӗн, унта ӗçлекенсен пӗлтерӗшне пысăклатать. Районра халӗ темиçе тӗрлӗ специалиссем, хуçалăха учот туса, планласа пыракан, партипе правительствă кăтартăвӗсене пурнăçланине тӗрӗслесе тăракан работниксем пур.

Ялти интеллигенци ССРС, союзлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечӗн суйлавӗ вăхăтӗнче хăйне аван енчен кăтартрӗ. Парти организацисем вӗсем хушшинчен аван агитатăрсем, чаплă организатăрсем илсе тăчӗç, вӗсем суйлав кампанинче хăйсен пултарулăхне тивӗçлипех кăтартрӗç. **Пирӗн ялта ӗçлекен, колхозсемпе совхозсенче ӗçлекен партире тăракан тата партире тăман кадрсем—политикăлă пысăк вăй.** Совет влаçӗ хăйӗн ӗçӗсене çак çынсем пулăшнипе туса пырать, вӗсем совет влиянине сарса пыраççӗ, государствă интересӗсен хуралӗнче тăраççӗ. Пирӗн çак кадрсем çине тимлӗн пăхмала, вӗсемшӗн тăрăшмала, вӗсене пирӗн çӗршывра обшӗствăпа государствă деятелӗ йышăнса тăракан çӳлӗ вырăна хăпартмала.

Анчах та, ялти интеллигенци пысăк вырăн йышăнса тăрать пулсан та, ун çине çаплах парти организацисем тивӗçлипе пăхмаççӗха. Ку таранччĕнех парти организацисем политикăлă ӗçсене колхозниксем хушшинче кăна туса пыраççӗ, ялти кадрсем çинчен, ялти интеллигенци çинчен, хуçалăх ӗçне тытса пыма тивӗçлӗ çынсем çинчен пачах манаççӗ. Çакăн пек пулни вăл нимӗне юрăхсăр ӗç. Пирӗн совет ялӗнче ӗçлекен кадрсем—социалисăм строительствине активлăн хутшăнса ӗçлекенсем. Вӗсем куллен-кун колхоз стройне тӗреклетессишӗн ывăнма пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Парти организацисем вӗсене тăтăшах политикă енчен воспитани парса пырас пулсан, ялти интеллигенци тата та нумайтарах тума пултарӗччӗ!

Ялти интеллигенци çине, совет аппаратӗнче ӗçлекен служащи çине иккӗмӗш вырăнта, „иккӗмӗш сортра“ тăракан çынсем вырăнне шутласа пăхни хăрушă та сиенлӗ. Çакнашкал махаявла, советла мар туртăм çине пӗтӗм вăйпа сиксе ӳкмеле!

Иккӗленме çук йăнăш вăл—нумай парторганизацисем ялти интеллигенцине Пӗтӗм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Партин историне вӗренме пулăшас, марксисăм-ленинисăма вӗренсе алла илме пулăшас енӗпе ку тарана çитсе те нимӗн те туманни пулать. ПСК(б)П историйӗ чăн малтан, пирӗн хуларипе ялти партири тата партире мар пӗтӗм интеллигенцине тивет. Çавăнпа та пирӗн ялта ӗçлекен кадрсене марксисăм-ленинисăма вӗренсе алла илмеле тăвас, çак хаклăран та хаклă хӗçпăшалпа вӗсен практикăлă ӗçӗнче усă курмала тăвас енӗпе пурне те тумала.

Умра тăракан ӗçсем пысăк. Ялти вырăнсенче лекторсен ӗçне йӗркелесе яма тăрăшмала. Ялти интеллигенци вальли лайăх лекторсем пулмала, çакăн çинчен тăрăшас пулать обкомсен, крайкомсен, нацилӗ компарти Тӗпкомӗсен. ПСК(б)П историн пысăкрах темисем тăрăх тăтăшах лекцисем туса пырас ӗçе организацилени, вӗсене кустарла мар, государствă ӗçӗ вырăнне хурса организацилени нумай усă пама пултараççӗ.

Çакна та хисепе илмесӗр тăма çук—нумай райкомсенче пропагандă ӗçне пӗр штатлă пропагандис кăна туса пырать, вăл та çитменнине тата вăйсăртарах пулать. Нумай райкомсен çакнашкал пропагандис та çук. Парткабинетсем, библиотекăсем, яланхи пекех райкомсенчен, культпропсенчен татăлса кайаççӗ, хăйсене пӗлнӗ пек ӗçлеççӗ. Консультаци ӗçне тӗрӗс йӗркелени, хулари лайăх пропагандиссене ӗçе хутшăнтарни мӗн пек пысăк вырăн йышăнма пултарасси паллă мар-и вара? Теори енчен ялти кадрсем уйрăмах кайа юлнă. Çак çитменлӗхе пирӗн мӗнле те пулсан халех пӗтерес пулать.

ПСК(б)П историне тарăнăн вӗренме хатӗрленнӗ чухне парти организацисен ялти кадрсем çинчен пӗр минут та манса тăмала мар. Ялти интеллигенцине марксисăм-ленинисăмпа хӗçпăшаллантарни пуян çимӗç парать, епӗр коммунисăм патне пырассине хăвăртлатать.

(„Правда“ умстатьинчен, 1938 ç. октябӗрӗн 17-мӗш).

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

„За отвагу“ медаль тăвасси çинчен

1. „За отвагу“ медаль тăвас.
2. „За отвагу“ медаль Положенине, унăн ӳкерчӗкне тата медаль мӗнлине çырса кăтартнине çирӗплетес.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Председатӗл Заместителӗ Г. ПЕТРОВСКИЙ.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Çекретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти октябӗрӗн 17-мӗш.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн УКАЗӖ

„За боевые заслуги“ медаль тăвасси çинчен

1. „За боевые заслуги“ медаль тăвас.
2. „За боевые заслуги“ медаль Положенине, унăн ӳкерчӗкне тата медаль мӗнлине çырса кăтартнине çирӗплетес.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Председатӗл Заместишелӗ Г. ПЕТРОВСКИЙ.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Çекретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти октябӗрӗн 17-мӗш.

„За отвагу“ медаль çинчен кăларнă Положени

1. „За отвагу“ медальпе Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Çарӗн, Тинӗс-Çар Флочӗн тата чикӗри хурал Çарӗсен рядовойӗсен, командирӗсемпе начальникӗсен составӗнче çар службинче тăракансене, вăрçă ӗçӗсем пынă çӗрте, государствă чиккисене никама пăсма памасăр сыхланă çӗрте Совет Союзӗн тăшманӗсене хирӗç пыракан çапăçусенче, йе диверсантсене, шпионсене тата Совет государствин ытти тăшманӗсене хирӗç кӗрешес ӗçре паттăрлăхпа хăюлăх палăртнăшăн наградăлаççӗ.

2. Медальпе ССР Союзӗн Верховнăй Совет Президиумӗ наградăлать.

3. Медальпе наградăланă çынсене государствă шутӗнчен уйăхне 10-шар тенкӗ тӳлеççӗ. Тӳлессе перекет кассисем тӳлеççӗ.

4. Медальпе наградăланă çынсем хăйсем ССР Союзӗн пур хулисенче те трамвайсем çинче тӳлевсӗр ларса çӳрес правапа усă кураççӗ.

4. Медале кăкăрăн сулахай енче çакса çӳреççӗ.

6. Парадсенче, революцилӗ праçникосенче тата чаплă ларусенче медале обязательнăй йӗркепех çакса çӳрес пулать.

7. Медале кайала илессине ССРС Верховнăй Совечӗн Президиумӗ тăвать.

8. Медальпе наградăланă çынсем Совет государствин тăшманӗсене хирӗç кӗрешес ӗçре хăйсем хăюлăх, паттăрлăх примерӗ кăтартма тата государствă обязаннăçӗсене пурнăçа кӗртнӗ çӗрте ытти граждăнсемшӗн образец пулса тăма тивӗç.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Председатӗл Заместителӗ Г. ПЕТРОВСКИЙ.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Çекретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти октябӗрӗн 17-мӗш.

„За боевые заслуги“ медаль çинчен кăларнă Положени

1. „За боевые заслуги“ медальпе Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Çарӗн, Тинӗс-Çар Флочӗн тата чикӗри хурал Çарӗсен рядовойӗсен, командирӗсемпе начальникӗсен составӗнче çар службинче тăракансене, çавăн пекех тата Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Çарӗн, Тинӗс-Çар Флочӗн, чикӗри хурал Çарӗсен ретӗнче тăман çынсене,—вӗсем Совет государствин тăшманӗсене хирӗç кӗрешес ӗçре хăйсен пурнăçӗшӗн хăрушлăх кӳрекен аслă, пуçарулă тата хăюлă ӗçсем туса, фронтри вăрçă ӗçӗсенче çитӗнӳсем тума пулăшнă пулсан,—наградăлаççӗ.

2. Медальпе ССР Союзӗн Верховнăй Совет Президиумӗ наградăлать.

3. Медальпе наградăланă çынсене государствă шутӗнчен уйăхне 5-шер тенкӗ тӳлеççӗ. Тӳлессе перекет кассисем тӳлеççӗ.

4. Медальпе наградăланă çынсем хăйсем ССР Союзӗнчи пур хуласенче те трамвайсем çинче тӳлевсӗр ларса çӳрес правапа усă кураççӗ.

5. Медале кăкăрăн сулахай енче çакса çӳреççӗ.

6. Парадсенче, революцилӗ праçниксенче тата чаплă ларусенче медале обязательнăй йӗркепех çакса çӳрес пулать.

7. Медале кайала илессине ССРС Верховнăй Совечӗн Президиумӗ тăвать.

8. Медальпе наградăланă çынсем ăна чыслăн çакса çӳреме тата государствă обязаннăçӗсене пурнăçа кӗртнӗ çӗрте тӳрӗ чӗрелӗ пулнин, ӗçе тӗплӗн тунин примерне кăтартма тивӗç.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Председатӗл Заместителӗ Г. ПЕТРОВСКИЙ.

ССРС Верховнăй Совет Президиумӗн Çекретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулти октябӗрӗн 17-мӗш.

Францири фашисла заговорщиксен бандитла ӗçӗ

Францире Дорио тата Де ля Рокăн бандитла шайкинче тăракан фашиссем компартине хирӗçле кампани пуçарса янипе пӗрлех, коммуниссене хирӗç диверçисемпе террорла ӗçсем тума тытăннă. Октябӗрӗн 7-мӗшӗнче компарти членӗ—Абель Кассйе—Понтуазри (Париж çывăхӗнче) профсоюзсен вырăнти пӗрлешӗвӗн çекретарӗ сасартăк çухалнă пулнă. Кассйен татăкаланса пӗтнӗ ӳтне пӗр чукун çул линин рельсисем çинче тупнă. Çак ӗçе тӗплӗн йӗрлесе пăхнă хыççăн, Кассйене малтан вӗлернӗ пулнă, унтан ун виллине, ирсӗр преступленине пытарас шутпа пуйăс çинчен вакунсем айне пăрахса хăварнă. Франци хаçачӗсем Кассйене фашиссем вӗлернӗ, тесе çыраççӗ.

(ТАСС).



Л. Г. БЕЛОНОШКИН—Канаш—Шупашкар чукунçул строительствинчи трактăрист-стахановец, нормăна 175 проц. тултарса ӗçлет.
Бабайӗв фото-ӳкерчӗкӗ.

Амăрту сарăлса пырать

Трак районӗнчи „Унгастрой“ колхозри А. Федăрăв колхозник темиçе çул хушши пахча-çимӗç бригадин бригадирӗ пулса ӗçлет. Федăрăв бригади тухăçлă пахча-çимӗçсем туса илме вӗренсе пырать, агротехникăна вăхăтра тата тӗрӗс пурнăçа кӗртеççӗ. Кăçал ку бригадă вăйлă пахча-çимӗçсем туса илчӗ. Вăтам шутпа пӗр гектартан 250 центнӗр хӗрлӗ кăшман, 269 центнӗр кишӗр, 110 центнӗр сухан пуçтарса илнӗ. „Лорх“ текен суртлă çӗрулмине яровизаци туса акнипе гектартан 140 центнӗр туса илнӗ.

Колхозниксем ӗçкунӗсем тăрăх тӗштырă тата укçан илнисӗр пуçне пахча-çимӗçсем те нумай илеç-çӗ.

„Унгастрой“ колхоз Аслă Октябӗр уявӗ умӗнхи ăмăртăва тивӗçлипе сарса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем уява ялхуçалăх ӗçӗсене пӗтӗмпех ăнăçлăн вӗçленипе кӗтсе илессишӗн ăмăртаççӗ. Бригадăсем авăн çапса пӗтернӗ, государствăна памали парăмсене парса татнă. Кӗрхи çӗртме сухи планне тултарнă. Хальвыльăхсене хӗл каçарма, тупăшсене ӗçкунӗсем тăрăх валеçсе пама хатӗрленеççӗ.

И. Дубровин.

Стахановец-стрелочниксем

Канаш станци узӗлӗнчи стрелочниксем Октябӗрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултаракан уяв умӗнхи ăмăртăва хутшăннăранпа хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыма тытăнчӗç. Аслă стрелочниксем И. Дмитрийӗв, Манзуров, Нужин юлташсем кашни кунах хăйсен нормисене 132—160 процент, кӗçӗн стрелочниксем Корниловпа Сергейӗв юлташсем 150 процент тултарса ӗçлеççӗ.

Уяв умӗнхи ăмăртăва хутшăннăранпа стрелочниксем хушшинче стахановецсен хисепӗ те чылайах ӳсрӗ.

С. Филиппăв.

Çӗнӗ цех ӗçлеме пуçларӗ

Иртнӗ çул вӗçӗнче „Дубитель“ тресчӗ Çӗмӗрлери „Большевик“ савăтра хаклă йышши екстракт (скумпи) туса кăлармали çӗнӗ цех тума хушăччӗ.

Савăтри инженерлă-техниклă работниксемпе механически цехри рабочисен коллективӗ тăрăшса ӗçленипе строительствăна вăхăтра туса пӗтерсе, кăçалхи май—çентябӗр уйăхӗсем хушшинче монтаж вырнаçтарса лартрӗç. Ку ӗçре уйрăмăнах тимӗрçсем, слесăрсем, токăрсем, плотниксем пысăк пулăшу кăтартнине палăртмала. Акă, уйрăм стахановецсем: котелшчик Кулаков, тимӗрç—Закальябин, медниксем—Голубовский тата Пономаренко, слесăрсем—Кистанăв, Мирошниченко, плотниксем—Красикăв, Разувайӗв т. ыт. юлташсем яланах икшер нормă тултарса ӗçлерӗç.

Çӗнӗ цеха техникă енчен лайăх пӗлсе тунă, илемлӗ. Унта душ, вентиляци пур. Цех октябӗрӗн 1-мӗшӗнче ӗçлеме пуçланă.

Н. Иваницкий.

Словакири автономлă правительствăн реакцилӗ ӗçӗсем

Словакире реакци сарăлсах пырать. Правительствă йышăннă тăрăх, муниципалитетсемпе влаçăн вырăнти оргăнӗсене пурне те салатса янă. Вӗсен вырăнне автономлă правительствăн комиссарӗсене лартнă. Правительствăна пулăшса пыракан оргăнсем вырăнне Словакире пур çӗрте те „национальнăй советсем“ текенскерсене тăваççӗ. Вӗсене Словакири автономиссен, фашиссен „национальнăй парти“ тата аграри партисен представителӗсенчен туса хураççӗ. Словакири пӗтӗмӗшле „национальнăй совет“ руководителӗ пулма Сидор депутата, Польшă фашисăмӗн Словакири паллă агентне, уйăрнă. Хальтата государствă учрежденисенчен чех служащисене тасатас ӗç пуçланнă. Çак тасату хыççăн, государствă службинче тăракан тата чукунçулсем çинче ӗçлекен темиçе çӗршер чехсем ӗççӗр тăрса юлаççӗ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

III-мĕш сыпăкăн йулашки

6. I Государственнăй думăна салатса йани. II Государственнăй думăна пухни. Партин V-мĕш сиесĕ. II Государственнăй думăна салатса йани. Вырăссен пĕрремĕш революци паранннин сăлтавĕсем.

I Государственнăй думă патша правительствине çителĕклех итлекенскер пулман пирки, патша правительстви ăна 1906 çулта çулла салатса йанă. Вăл халăха хирĕç репреççисене тата ытларах вăйлăлатнă, мĕнпур çĕршыв тăрăх карательнăй експедицисен çĕмĕрӳлĕ ĕçне сарса йанă тата хăй çитес çывăх вăхăтрах II Государственнăй думăна пухма йышăнни çинчен пĕлтернĕ. Патша правительстви куçкĕретех сĕмсĕрленсе пынă. Революци чакса пынине курса, халь ĕнтĕ вăл революцирен хăраман.

Большевиксен II думăна хутшăнасси йе ăна бойкот тăвасси çинчен ыйтăва татса памала пулнă. Бойкот çинчен каласа, большевиксем йаланах суйлавсене простă тата пассивлă хутшăнмасăр йулассине мар, активлăн бойкот тăвассине асра тытнă. Большевиксем активлă бойкота: вăл—патша халăха революцилĕ çулран патша „конституцин" çулĕ çине пăрса йама хăтланнинчен сыхлантармали революцилĕ меслет, çавăн пек хăтланнине пĕтерсе хумали тата халăх патша йĕрки çине çĕнĕрен тапăнассине организацилемели меслет, тесе шутланă.

Булыгин думине бойкот тунин опычĕ çакна кăтартса панă: бойкот „пĕртенпĕр тĕрĕс тактикă пулчĕ, ăна событисем пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе пачĕç" (**Ленин**, том X, стр. 27). Çак бойкот ăнăçлă пулнă, мĕншĕн тесен вăл халăха патша конституцийĕн çулĕн хăрушлăхĕнчен сыхлантарнă кăна мар, думăна çуралма ĕлкĕричченех пĕтерсе хунă. Бойкот ăна революци чакса пынă вăхăтра мар, революци **çĕкленни ӳссе пынă** вăхăтра туса ирттернĕрен тата вăл çав çĕкленӳ çине тайăннăран ăнăçлă пулнă, мĕншĕн тесен революци **çĕкленсе пынă** условисенче çеç думăна пĕтерсе хума пулаť.

Витте думине, йе урăхла каласан, I думăна декабĕрти восстани паранннă хыççăн, патша çĕнтерекен пулса тăнă вăхăтра, революци чакма пуçларĕ тесе шухăшлама май пулнă чухне туса ирттернĕ.

„Анчах, тесе çырнă Ленин, хăйех те паллă ĕнтĕ, ку çĕнтерĕве (патшанне.—**Ред.**) татăклă çĕнтерӳ тесе шутлама унчухне сăлтавсем пулман-ха. 1905 çулти декабĕрти восстани 1906 çулта çулла чылай çĕрте уйрăмшарăн, пайăн-пайăн пулса иртнĕ çарти восстанисемпе тата стачкăсемпе малала тăсăлнă. Витте думине бойкот тумали лозунг çав восстанисене пĕрлештерессишĕн тата пĕтĕçтерессишĕн кĕрешмели лозунг пулнă" (**Ленин**, т. XII, стр. 20).

Витте думине бойкот туни, çав думăн авторитетне чылайăх хавшатнă пулин те тата халăхăн пĕр пайĕ думăна ĕненнине вăйсăрлатнă пулин те, думăна пĕтерсе хума пултарайман, мĕншĕн тесен ăна, хаљ ĕнтĕ вăл уççăнах паллă пулчĕ, революци чакса, кайала кайса пынă вăхăтра туса ирттернĕ. Çавăнпа 1906 çулта I думăна бойкот туни ăнăçлă пулман. Кун пирки Ленин хăйĕн „Детская болезнь „левизны" в коммунизме" йатлă чаплă брошӳринче çапла çырнă:

Большевиксем 1905 çулта «парламента» бойкот туни революцилĕ пролетариата питех те хаклă политикăла опытпа пуйанлатрĕ, кĕрешӳн легальнăй тата легальнăй мар, парламентри тата парламент тулашĕнчи формисене çыхăнтарса пынă чухне хăш чух кĕрешӳн парламентри формисене пăрахăç тума пĕлни усăллине тата пăрахăç тума пĕлни обйазательнă кирлине кăтартса пачĕ... Большевиксем 1906 çулти „думăна" бойкот туни ĕнтĕ йăнăш пулнă, пысăкскер мар тата тӳрлетме çăмăлскер пулин те, йăнăш пулнă... Уйрăм çынсем çинчен калама йуранине кирлĕ пек улшăнусем кĕртсе политика çинчен тата партисем çинчен калама йураť. Аслă çын вăл—йăнăш тумасси мар. Ун пек çынсем çук, пулма та пултараймаççĕ. Аслă çын вăл пысăках мар йăнăшсем тăваканни тата вĕсене çăмăллăн та хăвăрт тӳрлетме пĕлекенни» (**Ленин**, т. XXV, стр.182—183).

II Государственнăй думăна илсен, Ленин лару-тăру улшăнна тата революци чакса пынă пирки большевиксен «Государственнăй думăна бойкот тăвас ыйтăва тепĕр хут пăхса тухмала» (**Ленин**, т. X, стр. 26), тесе шутланă.

«Истори çакна кăтартса пачĕ, тесе çырнă Ленин, Думă пуханнă чухне ун ăшĕнчен тата ун патĕнче усăллă агитаци тума май пулаť; Думă ăшĕнче кадетсене хирĕç, революцилĕ хресченсемпе çывхарас тактикăна тытса пыма май пур» (çавăнтах, стр. 29).

Кусенчен пуринчен те çакă тухса тăнă: революци çĕкленĕвĕ пур чухне татăклăн наступлени тума, малти ретсенче пырса наступлени тума пĕлни кăна мар кирлĕ, çĕкленӳ çук чухне отступлени тĕрĕс тума та, йулашки ретсенче пырса отступлени тума та пĕлмеле, тактикăна улшăннă лару-тăрува май улăштарса пымала, уйрăмăн сапаланса мар, организацилĕ, лăпкăн, паникăсăр отступлени тумала, кадрсене тăшман çапас çĕртен илсе тухма, çĕнĕле йĕркеленме, вăйсене пухма тата тăшман çине çĕнĕрен наступлени тума хатĕрленме чи пĕчĕк майсемпе те усă курмала.

Большевиксем II думă суйлавĕсене хутшăнма йышăннă.

Анчах большевиксем думăна, меньшевиксем тунă пек, унта кадетсемпе блокра пулса органически „законодательнăй" ĕç туса тăма мар, думăпа революци интересĕсемшĕн трибунă вырăнне усă курма кайнă.

Меньшевикла Тĕпком, пачах тепĕр майлă, думăна патша правительствине çавăрлăхлама пултаракан законодательнăй учреждени тесе шутласа, суйлавра кадетсемпе килĕшӳ тума, думăра кадетсене хута кĕме чĕннĕ.

Парти организацисен нумайрахăшĕ меньшевикла Тĕпкомăн политикине хирĕç тăнă.

Большевиксем партин çĕнĕ сиесне пухма ыйтнă.

1907 çулти май уйăхĕнче Лондăнра партин V-мĕш сиесĕ пуханнă. Ку сиес пуханнă тĕле РСДРП ретĕнче (нацилĕ социал-демократла организацисемпе пĕрле) 150 пин член таран шутланнă. Сиесра пурĕ 336 делегат пулнă. Большевиксем 105 пулнă, меньшевиксем—97. Ытти делегатсем нацилĕ социал-демократла организацисен представительĕсем—польак тата латыш социал-демократĕсенчен тата Бундран пулнă, вĕсене кун умĕнхи сиесра РСДРП ретне илнĕ.

Троцкий сиесра хăйĕн центристла, урăхла каласан, çурмаменьшевикла уйрăм группине тума хăтланнă, анчах ун хыççăн никам та кайман.

Большевиксем хăйсем хыççăн польаксене тата латышсене илсе пынă май, сиесра вĕсем çирĕппĕнех ытларах пулнă.

Сиесра кĕрешӳн тĕп ыйтăвĕсенчен пĕри вăл—буржуаллă партисем çине мĕнле пăхасси çинчен тăракан ыйту пулнă. Ку ыйту тăрăх большевиксем тата меньшевиксем хушшинче II-мĕш сиесрах та ĕнтĕ кĕрешӳ пынă. Сиес пролетарилĕ мар партисене пурне те — черносотенецсене, октябриссене, кадетсене, есерсене — большевикла хак панă тата вăл партисем тĕлĕшпе большевикла тактикăна каласа панă.

Сиес большевиксен политикине ырланă тата черносотенецсен партийĕсене „Союз русского народа" организацине, монархиссене, пĕрлешнĕ дворйанства советне хирĕç те, çавăн пекех „Союз 17 октября" (октябриссем) организацине, суту-илӳ промышленнăç партине тата „мирное обновление" партине хирĕç хайаррăн кĕрешсе пыма решени йышăннă Çав партисем пурте уççăнах контрреволюцилĕ партисем пулнă.

Либеральнăй буржуази тĕлĕшпе, кадетсен партийĕ тĕлĕшпе илсен, сиес ăна нимĕн килĕшӳсĕр тăрă шыв çине кăларса унпа кĕрешсе пыма хушнă. Сиес кадетсен партин ултавлă, суйа „демократисăмне" тăрă шыв çине кăларса пыма тата либеральнăй буржуази хресченсен йухăмĕн пуçне тăма хăтланнисене хирĕç кĕрешме хушнă.

Народникла йе трудовой текен партисене (народнăй социалиссем, трудовайа группа, есерсем) илсен, сиес вĕсем социалиссем пек пулса маска тăхăнма хăтланнине тăрă шыв çине кăлармa сĕннĕ. Çав вăхăтрах сиес вăл партисемпе, унчухне çав партисем демократилĕ партисем пулнă тата хуларипе йалти вак буржуази интересĕсене палăртса тăнă пирки, патша йĕркине хирĕç тата кадетла буржуазине хирĕç пĕрле тата пĕр вăхăтра тапăнма уйрăм килĕшӳсем тума йураť, тенĕ.

Сиесченех меньшевиксем „рабочий сиес" тенĕ сиеса пухма сĕнсе тухса каланă. Меньшевиксен планĕ тăрăх, вăл сиеса социал-демократсем те, есерсем те, анархиссем те хутшăнмала пулнă. Çав „рабочий" сиес те темĕнле „партилĕ мар парти", те программăсăр вак буржуаллă „сарлака" рабочи парти тумала пулнă. Меньшевиксен çак пит сийенлĕ хăтланăвне рабочисен социал-демократла партине пĕтерсе хума, рабочи класăн малта пыракан отрйадне вак буржуаллă массă хушшинче сапалантарса йама хăтланнине Ленин тăрă шыв çине кăларнă. Сиес меньшевиксен „рабочий сиес" текен лозунгне хыттăн сивленĕ.

Сиес ĕçĕсенче профсойузсем çинчен тăракан ыйту уйрăм вырăн йышăнна. Меньшевиксем профсойузсем „нейтральнăй" пулмала тесе тăнă, урăхла каласан, партин профсойузсене йертсе пырас рольне хирĕç тăнă. Сиес меньшевиксен сĕнĕвне сирсе пăрахса, профсойузсем çинчен большевикла резолюци йышăннă. Вăл резолюцинче парти профсойузсене идейă тата политика тĕлĕшпе йертсе пырассине пурнăçа кĕртмеле, тесе кăтартса панă.

V-мĕш сиес рабочисен йухăмĕнче большевиксем пысăк çĕнтерӳ тунине пĕлтернĕ. Анчах большевиксем мăнкăмăлланман, çĕнтертĕмĕр-ха тесе лăпланса ларман. Ленин вĕсене çавна мар вĕрентнĕ. Большевиксем малашне те меньшевиксемпе кĕрешмелĕ пуласине пĕлсе тăнă.

Сталин йулташ хăйĕн 1907 çулта тухнă „Записки делегата" статйинче сиес результатĕсене çапла хакланă:

„Пĕтĕм Российăри малта пыракан рабочисем социал-демократин **революцилĕ йалавĕ** айне тăрса пĕтĕм Российăри пĕр партине чăннипех пĕрлешни çакăн пек Лондăнри сиесăн тĕп шухăшĕ, çапла унăн пĕтĕмĕшлĕ характерĕ".

Вăл статйара Сталин йулташ сиес **составĕ** çинчен çырса пĕлтернĕ. Большевик делегатсене пуринчен ытла шултăра промышленнăçлă районсенчен (Петербург, Мускав, Урал, Иваново-Вознесенск тата ыттисем те) йанă пулнă. Меньшевиксем сиеса ремесленнăй рабочисем, çурмапролетарисем нумайрах вак производствăлă районсенчен, çавăн пекех тата хресченсем çеç пуранакан районсенчен лекнĕ.

Уççăнах куранаť, тесе кăтартса панă Сталин йулташ, сиес итогĕсене туса, большевиксен тактики шултăра промышленнăçри пролетарисен тактики, класлă хирĕçӳсем уйрăмах уççăн палăрса тăракан тата класлă кĕрешӳ уйрăмах çивĕчĕн пыракан районсен тактики пулса тăраť. Большевисăм—вăл чăн-чăн пролетарисен тактики. Тепĕр йенчен, çакă та сахалрах мар уççăн куранса тăраť: меньшевиксен тактики пуринчен ытла ремесленнăй рабочисен тата хресченле çурма-пролетарисен тактики, класлă хирĕçӳсем уççăн палăрса тăман тата класлă кĕрешӳ уççăн куранман районсен тактики. Меньшевисăм—вăл пролетариатăн çурмабуржуаллă елеменчĕсен тактики. Çапла калаççĕ цифрăсем" (Протоколы V с'езда РСДРП, стр. XI и XII, 1935 г.).

I думăна салатса йарса, патша хăйне ытларах итлекен II думăна пухасшăн пулнă. Анчах II думă та кĕтнине паман. Патша çавăнпа та ку думăна та салатса йарас тата, пушшех начарлатнă суйлав саккунĕ тăрăх, III думă пухас тесе шут тытнă,—вăл думă хăйне ытларах итлекенскер пуласса шанса тăнă.

V-мĕш сиес хыççăн часах патша правительстви ийунĕн виççĕмĕшĕнчи переворот тенине туса хунă. 1907 çулти ийунĕн 3-мĕшĕнче патша II Государственнăй думăна салатса йанă. Социал-демократсен думăри фракцине, унта 65 депутат пулнă, арĕсленĕ те Çĕпĕре ссылкăна йанă. Çĕнĕ суйлав саккунне кăларнă. Рабочисемпе хресченсен прависене тата ытларах хĕсĕклетнĕ. Патша правительстви малала наступлени туса пынă.

Патша министрĕ Столыпин рабочисемпе хресченсене йунлă майпа хĕсĕрлессине сарса йанă. Карательнăй експедицисем пиншер рабочисемпе хресченсене персе пăрахнă тата çакса вĕлернĕ. Патша тĕрмисенче революционерсене асаплантарнă, хĕн кăтартнă. Рабочисен организацисене, чи малтан большевиксене уйрăмах хайаррăн хĕсĕрленĕ. Патша ишчейкисем Ленина шыранă, вăл ун чухне Финьандире вăрттăн пуранна. Вĕсем революци çулпуçне тытса вĕлересшĕн пулнă. Ленин 1907 çулти декабĕрте пит пысăк хăрушлăхпа каллех йут çĕршыва, емиграцине кăçса кайнă.

Столыпин реакцийĕн йăвăр çулĕсем пуçланнă.

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ, çапла вара, паранннипе вĕçленнĕ.

Ку вăл çак сăлтавсенчен килнĕ.

1. Революцире рабочисемпе хресченсен патша йĕркине хирĕç çирĕп сойузĕ пулман-ха. Хресченсем помещиксене хирĕç кĕрешĕве çĕкленнĕ, вĕсем помещиксене хирĕç рабочисемпе сойуз тăвассишĕн тăнă. Анчах вĕсем патшана сирпĕтсе антармасăр помещиксене сирпĕтсе антарма май çуккине ăнланманха, вĕсем патша помещиксемпе пĕр ĕçех тунине ăнланман, çавăнпа хресченсен чылай пайĕ патшана ĕненнĕ тата патшан Государственнăй думи çине шанса тăнă. Çавăнпа нумай хресченсем патша йĕркине сирпĕтсе антарма рабочисемпе сойуз тăвасшăн пулман. Хресченсем чăн-чăн революционерсене—большевиксене ĕненнинчен ытларах, есерсен соглашательле партине ĕненнĕ. Çавна пула хресченсен помещиксене хирĕç кĕрешĕвĕ çителĕклĕ организациленмен пулнă. Ленин çапла кăтартса панă:

„...хресченсем ытла та сапаланчăк, организацилĕ мар, наступлени çителĕклĕ туса пымасăр кĕрешрĕç, çавăнта ĕнтĕ революци паранннин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри (**Ленин**, том XIX, стр. 354).

2. Хресченсен чылай пайĕ рабочисемпе пĕрле пулса патша йĕркине сирпĕтсе антарассишĕн тăманни çар хăйне тыткаланинче те палăрнă, унта нумайрахăшĕ хресченсен салтак шинелĕсене тăхăннă ывăлĕсем пулнă. Патша çарĕн уйрăм чаçĕсенче пăлханусемпе восстанисем пулнă, анчах салтаксем нумайрахăшĕ патшана рабочисен забастовкисемпе восстанийĕсене пусарма пулăшнă.

3. Рабочисем те кĕрешĕве çителĕклĕ таран кар тăрса тухайман. Рабочи класăн малта пыракан отрйачĕсем 1905 çулта революцилĕ паттăр кĕрешӳ сарса йанă. Кайарах йулнă сийсем—промышленнăç сахалтарах пулнă кĕпĕрнесенчи рабочисем, йалта пуранакансем,—вăрахăнрах хускалнă. Вĕсем революцилĕ кĕрешĕве хутшăнни уйрăмах 1906 çулта вăйланнă, анчах вăл вăхăт тĕлне рабочи класăн авангардне чылайăх вăйсăрлатнă пулнă.

4. Рабочи клас революцин малта пыракан тĕп вăйĕ пулнă, анчах рабочи клас партин ретĕсенче кирлĕ пĕрлĕх тата пĕтĕçӳлĕх пулман. РСДРП—рабочи класăн партийĕ икĕ группăна пайланса тăнă: большевиксем тата меньшевиксем пулнă. Большевиксем вĕçне çитиех революцилĕ линине тытса пырса, рабочисене патша йĕркине сирпĕтсе антарма чĕннĕ. Меньшевиксем хăйсен соглашательле тактикипе революцине чăрмантарса пынă, рабочисен чылай пайне пăтраштарнă, рабочи класа темиçе пайа уйăрса пынă. Çавăнпа рабочисем революцире пур чухне те пĕр кар пулайман, рабочи клас, хăйĕн ретĕсен пĕрлĕхĕ пулманнипе, революцин чăн-чăн çулпуçĕ пулса тăма пултарайман.

5. Патша самодержавине 1905 çулти революцине пусарма Хĕвеланăç Йевропăри империалиссем пулăшнă. Йут çĕршывсенчи капиталиссем хăйсен Российăра хывнă капиталĕсем тата пит пысăк дохочĕсем пĕтесрен хăранă. Унсăр пуçне, вĕсем вырăс революцийĕ çĕнтерес пулсан ытти çĕршывсенчи рабочисем те революци тума çĕкленесрен хăранă. Çавăнпа Хĕвеланăç Йевропăри империалиссем патшана-палача пулăшнă. Францири банкирсем революцине пусарма патшана пысăк зайом панă. Германи патши вырăс патшине пулăшса интервенци тума нумай пинлĕ çар хатĕр тытнă.

6. Патшана 1905 çулти çентябĕрте Йапонипе тунă мир те пысăк пулăшу панă. Вăрçăра паранни тата революци хăрушшăн ӳссе пыни патшана мир тума васкатнă. Вăрçăра паранни патша йĕркинĕ вăйсăрлатнă. Мир туни патшан лару-тăруне çирĕплетнĕ.

Кĕске вывăдсем

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ пирĕн çĕршывăн аталанăвĕнче историлĕ пĕр пĕтĕм полоса пулса тăраť. Çак историлĕ полоса икĕ тапхăртан тăраť. Пĕрремĕш тапхăрĕнче—Манчжури хирĕсенче паранса пынă патшан вăйсăрлăхĕпе усă курса, Булыгин думине шăлса ывăтса тата патшаран уступкă хыççăн уступкă туртса илсе революци октябĕрти политикăлă пĕтĕмĕшлĕ стачкăран декабĕрти хĕçпăшаллă восстани патне çĕкленсе пынă; тата иккĕмĕш тапхăрĕнче—патша Йапонипе мир тунă хыççăн вăй илсе, либеральнăй буржуази революцирен хăранипе усă кураť, хресченсем иккĕленнипе усă кураť, вĕсене татăк пăрахса панă пек Витте думине параť тата рабочи класа хирĕç, революцине хирĕç наступлени тума пуçлаť.

Революцин виçĕ çулĕ хушшинчех (1905—1907 ç.) рабочи класпа хресченсем политикăлă воспитанин çав тери пуйан шкулне туйанна, ун пеккине вĕсем йаланхи пек мирлĕ аталанун вăтăр çулĕ хушшинче те туйанайман пулнă пулĕччĕç. Аталанун мирлĕ условийĕсенче вуншар çул хушшинче те уççăн палăртма пулманнине революцин темиçе çулĕ уççăн палăртрĕç.

Революци—патша йĕрки халăхăн чи усал тăшманĕ иккенне, патша йĕрки—виле шăтăкĕ çеç тӳрлетме пултаракан курпун пулса тăнине уçса кăтартрĕ.

Революци—либеральнăй буржуази халăхпа мар, патшапа сойуз шыранине, вăл контрреволюцилĕ вăй пулса тăнине, унпа килĕшни халăха сутăнипе пĕрех пулнине кăтартса пачĕ.

Революци—рабочи клас çеç буржуаллă-демократилĕ революцин çулпуçĕ пулма пултарнине, вăл кăна кадетла либеральнăй буржуазине сирсе йама, хресченсене унăн влийанинчен хăтарма, помещиксене çĕмĕрсе тăкма, революцине чи вĕçне çитерме тата социалисăм вальи çул уçса хума пултарнине кăтартса пачĕ.

Революци, йулашкинчен, ĕçхресченĕсем, вĕсем иккĕленнине пăхмасăрах, çапах та рабочи класпа сойуз тума пултаракан пĕртенпĕр пысăк вăй пулса тăнине кăтартрĕ.

Революци вăхăтĕнче РСДРП-ра икĕ лини кĕрешнĕ, большевиксен линийĕ тата меньшевиксен линийĕ. Большевиксем революцине сарса йарас, хĕçпăшаллă восстани туса патша йĕркине сирпĕтсе антарас, рабочи клас гегемонине тăвас, кадетла буржуазине пĕччен тăратса хăварас, хресченсемпе сойуз тăвас, рабочисемпе хресченсен представительĕсенчен революцилĕ вăхăтлăх правительствă тăвас, революцине çĕнтерӳлĕн вĕçлесе çитерес çул тытса пынă. Меньшевиксем, пачах урăхла, революцине пĕтерсе лартас çул тытса пынă. Восстани туса патша йĕркине сирпĕтсе антарасси вырăнне вĕсем ăна реформă тума тата „лайăхлатма" сĕннĕ, пролетариат гегемонийĕ вырăнне—либеральнăй буржуази гегемонине, хресченсемпе сойуз тăвасси вырăнне—кадетла буржуазипе сойуз тăвассине, революцилĕ вăхăтлăх правительствă вырăнне—çĕршыври „революцилĕ вăйсен центрĕ" тесе шутласа Государственнăй думăна сĕннĕ.

Çапла, рабочи клас хушшине буржуази влийанине кĕртекенскерсем пулса тăрса, ĕçре буржуазин рабочи клас хушшинчи агенчĕсем пулса тăрса, меньшевиксем соглашательствă лачакине кĕрсе ӳкнĕ.

Большевиксем партире тата çĕршывра революцилĕ-марксисла пĕртенпĕр вăй пулнă.

Ăнланмала ĕнтĕ, çавăн пек пысăк разногласисем хыççăн РСДРП чăннипе икĕ партине, большевиксен партине тата меньшевиксен партине уйăрăлса кайнă. Партин IV-мĕш сиесĕ парти ăшĕнчи лару-тăрура нимĕнле улшăнусем те туман. Вăл партин **формальнăй** пĕрлĕхне сыхласа хăварнă тата кăштах çирĕплетнĕ çеç. Партин V-мĕш сиесĕ партине **чăннипех** пĕрлештересси йенне пĕр утăм тунă тата çав пĕрлешӳ большевисăм йалавĕ айĕнче пулса иртнĕ.

Революцилĕ йухăмăн итогĕсене туса, партин V-мĕш сиесĕ меньшевиксен линине соглашательле лини тесе сивленĕ, тата большевиксен линине революцилĕ-марксисла лини тесе ырланă. Çакăнпа вăл вырăссен пĕрремĕш революцийĕ пулса пынăçемĕн çирĕпленнине тепĕр хут çирĕплетсе панă.

Революци—большевиксем лару-тăру хушнă чухне наступлени тума пĕлнине, вĕсем малти ретсенче пырса наступлени тума тата штурм тума халăха хăйсен хыççăн илсе пыма вĕренсе çитнине кăтартса панă. Тата революци, унсăр пуçне, большевиксем, лару-тăру килĕшӳлĕ мар пулса кайсан, революци чакса пыраť пулсан, йĕркелĕн отступлени тума пĕлнине, большевиксем, кадрсене упраса хăварас, вăйсене пухас, çĕнĕ лару-тăрува кура çĕнĕле йĕркеленсе тăшман çине çĕнĕрен наступленине кайас тесе, тĕрĕс, паникăсăр, тĕркĕнмесĕр отступлени тума та вĕренсе çитнине кăтартса панă.

Наступленине тĕрĕс тума пĕлнисĕр тăшмана çĕнтерме çук.

Отступленине тĕрĕс тума, отступленине паникăсăр, пăтранса каймасăр тума пĕлнисĕр, паранна чухне хăвна аркатса тăкассинчен хăтăлма çук.


(ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн малалли „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнă тĕле

ПСÇЛКС 20 çул тултарнă йатпа Кирăвски савăтри (Ленинград) стаханăвĕц-комсомолĕцсем пропашниксем вальи планран иртерсе 50 двигатĕл туса кăлараççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Стаханăвĕц-комсомолĕцсем Н. Арсенийĕв (сылтăмра) тата М. Добрйатин двигатĕлсене пухса хатĕрлеççĕ.

А. Агич фото-ӳкерчĕкĕ („Прессклише").



Йалти библиотекăсем

Колхозниксен культурлăхĕ ӳснипе пĕрле вĕсен тĕрлĕрен кĕнекесене вулас интерес та пысăккăн ӳсет. Çакă вăл йалсенчи библиотекăсен хисепĕнчен те куранаť, вĕсен хисепĕ çулран çул ӳссе пыраť.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ кăçал республикăра çĕнĕрен 16 библиотекă уçнă, вăл библиотекăсем вальи темиçе пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен кĕнекесем йарса панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти документчĕсене тĕрĕс йĕркелемеле

Вăрнар райĕçтăвкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче парти ретне тата сочувствуйушчисен группине çĕнĕрен илнисен материалĕсене парти райкомне çитсессĕн те вăхăтра пăхса тухма май çук. Мĕншĕн тесен парторг Гаврилăв вăл материалсене тĕрĕс йĕркелесе йамасть. Материалсене пăхса тухнă хыççăн партине илессипе кунта парторганизаци мар, райĕçтăвком президиумĕ ĕçлет темеле. Акă, августăн 3-мĕшĕнче парторганизацин пухăвĕ Проњкин йулташа сочувствуйушчисен группине, Федăрăв йулташа парти кандидатне илнĕ. Анчах пуху протоколĕнчен çырса илнĕ выпискăне çапла тĕлĕнмеле çырнă:

„Выписка из протокола №... заседания президиума Вурнарского районного исполнительного комитета, Чувашской АССР от 3 августа 1938 г.

Слушали:

Заявление Пронькина машиниста электростанции о приеме в группу сочувствующих, Гаврилов".

Малала вара „президиум ларăвĕпе" Проњкин йулташа сочувствуйушчисен группине илнине çырнă. Парторг Гаврилăв выпискă çине ал пусать. Çакăн пек „президиум ларăвĕпе" йĕркеленĕ протоколăн выписки çине Федăрăв йулташа парти кандидатне илнине çырнă.

Ку çеç те мар. Гаврилăв йулташ çын йачĕсене пăтраштарма та „маçтăр". Акă, парторганизацин сентăбĕрĕн 3-мĕшĕнче пулнă пухăвăн протоколĕнче „постановили" вырăнне „положительные" тесе çавăрттарса хунă. Çав числарах парти кандидатне Сапожникăв йулташа парти членне илеççĕ. Анчах кандидатран парти членне куçас умĕн тултарнă анкетă çине парторг Гаврилăв хăй аллипех „перевести т. Сапожникова Петра Прокопьевича" тесе çырас вырăнне Константиновича тесе ашшĕ йатне улăштарса хурать.

Материалсене çакăн пек йурăхсăр туса парти райкомне тăрататть те, Гаврилăв йулташ икĕ уйăхлăха вĕренме тухса кайать. Çапла вара Гаврилăв йулташ парти ĕçне, парти хуçалăхне йĕркелĕ тăвасси çине мĕнпур партилĕхпе пăхас вырăнне пĕрне витĕр пăхнипе парти ретне, сочувствуйушчисен группине илнисене парти райкомĕнче çирĕплетеччĕнех виç-тăвата уйăх иртсе кайать.

С. Сергейĕв.

—o—

Комсорг ĕçне хытă критиклерĕç

Октăбĕрĕн 16-мĕшĕнче Чăваш радиокомитет çумĕнчи комсомол пуçламĕш организацин отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Комсомол организацийĕн ĕçĕсем çинчен комсоргзаместителĕ П. Александрăв йулташ отчот туса пачĕ. Александрăв йулташ хăйĕн отчотĕнче Чăваш радиокомитет çумĕнчи комсомол организацийĕ йулашки вăхăтра ытти комсомол организацийĕсем пекех ÿссе пынине, çав вăхăтрах комсомол организацийĕн пысăк çитменлĕхсем пуррине тата радиокомитет çумĕнчи комсомол организацийĕ халăх тăшманĕсен йулашкийĕсемпе кĕрешменни çинчен каласа пачĕ.

Пренире 9 комсомолĕц тухса каларĕç. Тухса каланă йулташсем комсорг ĕçне хытă критиклерĕç, комсорг комсомолĕцсене çителĕксĕр йертсе пынине палăртрĕç.

П. Иванов йулташ хăйĕн сăмахĕнче радиокомитет çумĕнчи комсомол организацийĕнче пайанхи куна çитсе те комсомолĕцсемпе уйрăмăн ĕçлесси, вĕсен пурнăçĕпе интересленесси пулманнине, комсомолĕцсен политшкулĕ ĕçлеме чарăннине, комсомолра тăман çамрăксемпе ĕçлесси çителĕксĕр пулса пынине, радиокомитет председателĕ пулнă халăх тăшманĕ троцкист Соколњникăва тăрă шыв çине кăларассипе комсомолĕцсем çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕ. Гињаровский йулташ, комсомолĕцсем хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене пурнăçламаннине, вăл обйазательствăсене мĕнле пурнăçласа пынине комсорг тĕрĕслеменнине, дисциплинă йапăхланнине палăртрĕ.

Вăрттăн (хуплăн) сасăласа, комитета Гињаровский, Н. Данилăв, Чиркова йулташсене суйларĕç.

Г. Иванов.

—o—

Пропагандиссене пулăшмаççĕ

Комсомолĕцсен политвĕренÿне лайăхлатас тĕлĕшпе Трак райкомĕ пайан кунччен нимĕн те тумасть. Комсомол пуçламĕш организацисенче политграмăтăна вĕренмели кружоксем районĕпе 40 шутланаççĕ, хаљ вĕсенчен çурри ытла ĕçлемеççĕ. Комсомол райкомĕ парти историн Кĕске курсне вĕренме 10—12 кружок тума палăртнă, анчах вĕренме хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Пропагандиссен çеминарĕсем пулмаççĕ.

Епĕ хам тăватă çул ĕнтĕ пропагандис пулса ĕçлетĕп. Ийуњрен вара Упи тата Йанмурзинă йалĕсенче ĕçлетĕп. Епĕ ĕçлекен политкружоксенчи комсомолĕцсем вĕренесшĕн питĕ тăрăшаççĕ. Вĕсем зањатисене пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ. Политвĕренÿ ĕçне, политикăлă-массăлă ĕçе лайăх йĕркеленĕ хыççăн çамрăксем комсомол ретне тата ытларах туртăнма пуçларĕç. Упире ийуљ уйăхĕнче 8 комсомолĕц пулнă, хаљ 24 комсомолĕц, Йанмурзинăра май уйăхĕнче 28 комсомолĕц пулнă, хаљ 40 комсомолĕца çитрĕ.

А. Киçељов.

Трак районĕнче шкулсене хисеп çук

Пĕлтĕр те, кăçал та Трак районĕнчи шкулсем вĕренÿ çулне начар хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Сăмахран, районри 42 шкултан çурри ытла пайанхи куна хĕл каçиччен çунтармалăх вутă турттарайман. Ку ыйтупа ик-виç хутчен шкул директăрĕсемпе шкул пуçлăхĕсен пĕчĕк канашлăвĕсем туса, вĕсене хытă сасăпа „вутă та турттарма пултараймастăр-и есĕр?!" тесе йатласа сĕр пуçне нимĕн те туман.

Вутă турттарасси уйрăмах вăтам шкулсемпе туллимар вăтам шкулсенче питĕ йапăх тăрать. Ку шкулсене ачасем темиçе йалтан, темиçе йалсоветĕнчен пынă пирки, вăл шкулсене нихăш йалсоветĕ те йышăнасшăн мар. Вăтам шкулсемпе туллимар вăтам шкулсем валњи вутă мĕнле майпа турттарассипе райĕçтăвком йенчен нимĕнле кăтартÿ та пулман. Çавăнпа та ку шкулсем валњи вутă турттарас тĕлĕшпе йалсоветсĕсемпе колхозсем (вĕсен ачисем унта вĕренеççĕ пулин те) договăрсем тумасăр, кутăнланса тăраççĕ.

Шкулсем валњи бÿджетсем тунă чухне, райфо кăтартнă тăрăх, вутă турттарма кашни кубла метр пуçне 5—6 тенкĕ çеç палăртнă. Унчухне шкул вуттисене 50—60 çухрăмран турттарасси çинчен никам та аса илмен, учителсем аса илнĕ пулин те, ун çинчен вĕсем йалсоветсĕсене шута илтермен.

Кун пирки учителсен август уйăхĕнче пулса иртнĕ районри конференцинче те питĕ хытă асăрхаттарса хăварчĕç. Çапах та шкулсене пулăшакан никам та çук. Шкул директăрĕсемпе шкул пуçлăхĕсем ик-виç çул хушши ĕнтĕ районри руководителсенчен шкул директăрĕсемпе шкул пуçлăхĕсен тата йалсовет председателĕсен пĕрлешÿлĕ канашлуне туса ирттерме ыйтаççĕ. Анчах вăл канашлăва пайан кунччен те туса ирттермеççĕха. Çавна пулах ĕнтĕ шкулсем валњи вутă турттарас ĕç кайа йулса пырать.

Çакăн пекех, районра шкулсем валњи стандартлă мебĕлсем (партăсем, сĕтелсем, пукансем, шкафсем т. ыт. те) хатĕрлес ĕç те йапăх. Ку тĕлĕшпе шкулсене никам та пулăшу памасть. 1937 çулта шкул пуçлăхĕсемпе директăрĕсем çине тăрса ыйтнă пирки, Именкассинче йатарласа районри шкулсен маçтерскойне уçнăччĕ. Пĕлтĕр райçутĕç пайĕн пуçлăхĕ пулнă Никифăрăв, ку пирĕншĕн ытлашши ĕç, епĕр кун пек предприйати тытма пултараймастпăр, тесе маçтерскойа хăй тĕллĕнех хупса лартрĕ. Кун хыççăн маçтерскойа райĕçтăвком хăй аллине илнĕ, анчах маçтерскойĕ пайан кун та ĕçлемест. Шкул заказĕсем икшер çул пурнăçа кĕмесĕр выртаççĕ. Маçтерскойа йертсе пыма йури шанчăксăр çынсене (растратчиксене, судпа айăпланнă çынсене) шанса панă.

Кăçал март уйăхĕн 7-мĕшĕнче райçутĕç пайĕ пур шкулсене те çав маçтерскойра партăсем тутарма кирлĕ таран укçа куçарма хушса йатарласа хут салатнă. Ку хутсене алла илнĕ хыççăн, районри шкулсем пурте тенĕ пекех 500 тенкĕрен пуçласа 1000 тенке çитиччен маçтерской шучĕ çине укçа куçарнă. Анчах çав март уйăхĕнче куçарнă укçасемшĕн пайан кун та пĕр шкул та маçтерскойран пĕр шăрпăк та алла илмен. Çавна пула ĕнтĕ, çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленнĕ чух, шкулсем партăсемсĕр, сĕтелсемсĕр, пукансемсĕр, шкафсемсĕр тăрса йулчĕç. Мĕншĕн тесен, çав йапаласене туйанмали укçасем маçтерской аллинче пулнă. Пайан кун та вăл укçасемшĕн ни йапала памаççĕ, ни укçине кайала памаççĕ.

Кун çинчен райĕçтăвком та, райçутĕç пайĕ те, районри суд органĕсем те питĕ лайăх пĕлсе тăраççĕ. Районри суд органĕсем кун пирки шкулсем панă жалăбăсене кайала таврса параççĕ, никам пирки те нимĕнле мерă та йышăнмаççĕ. Анчах, шкулсем валњи кирлĕ мебĕлсене хатĕрлеменшĕн шкул пуçлăхĕсемпе директăрĕсене кашни канашлурах йатлаççĕ.

Суту-илÿ организацисем шкул заказĕсене йури пурнăçа кĕртмесĕр тăраççĕ. Акă, Вањушкассинчи пуçламĕш шкул, Йанкасрипе Кĕçĕн Шетмĕри туллимар вăтам шкулсем 5—6 хутчен ĕнтĕ райсойузпа Трак йалпоне пукансем илсе килме заказсем панă. Кунта пуçлăхсем пире пукансем илсе килсе сутниичен „выгăдă çук!" тесе ответлеççĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те Трак районĕнчи шкулсем çине йĕрĕнсе пăхать. Ку йапалана районри шкулсенчен нийепле те пытарма çук. Акă, иккĕмĕш уйăх вĕренетпĕр пулин те, районри шкулсем çурри ытла класнăй журналсемсĕр ĕçлеççĕ. Трак районĕнчи шкулсене памали класнăй журналсене Çĕрпÿ хулинчи книготорга сутса пĕтернĕ. Хăшпĕр пуçламĕш шкулсем 5 тенкĕлĕх (икĕ журнал хакĕ) журнал илме Çĕрпÿ хулине 15—20 тенкĕ лав укçи тÿлесе кайнисем те пур. Çак мăшкăл мари ĕнтĕ вăл!

Пĕр сăмахпа каласан, Трак районĕнче шкулсен ĕçĕсем çине чăтма çук çиелтен пăхаççĕ.

Кунашкал ÿрĕк-сÿрĕк ĕçлессине, шкулсем çине мăшкăласа пăхассине пĕтерме вăхăт ĕнтĕ.

Мих. ЙУРЙĔВ.

Химилĕ оборонăна вĕренеççĕ

Çак кунсенче Улатăрти педучилишчăра ПВХО кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Вĕренекенсем кружок зањатисене йĕркелĕ çÿреççĕ.

Кружок членĕсем комсомол уйавĕ тĕлне пурте ПВХО значокĕсене илессишĕн тăрăшаççĕ. Кружока химилĕ оборонă ĕçĕн инструктăрĕ Лапотникăвă йулташ йертсе пырать, вăл хăйĕн ĕçне лайăх тăвать.

И. Кулнекин.

Хаçатсене пăхса тухни

Хăравçăсем пирки

„За революционную законность" (Йустици Халăх Комиссариачĕ) стена хаçачĕн 14-мĕш номерĕ. Çав хаçатра тухнă статйасемпе заметкăсен автăрĕсем:

„Васкавлă пулăшу !паракан аптекă". Автăрĕ „Сотрудник".

„Пĕр пус çинчен". Автăрĕ „Чайкă".

„Бухгалтеринчи йĕркесĕрлĕхсем çинчен". Автăрĕ „Далекий".

„Суд пулакан залра шавлаççĕ". Автăрĕ—„Редька".

„Шайбин член укçи тÿлемест". Автăрĕ—„МОПР членĕ".

„Путовкăпа кам усă курнă?" Автăрĕ—„Глаз".

„Кам пулăшĕ-ши?" „Автăрĕ „В. П."

Хаçат автăрĕсем çавăн пек алпусни Йустици Халăх Комиссариатĕнче, Верховнăй судра тата Прокуратурăра ĕçлекенсем аппаратри çитменлĕхсене, руководителсен ĕçĕнчи йăнăшсене боњшевикла критиклеме хăрани çинчен калаççĕ. Корреспондентсем, çавăн пекех „За революционную законность" стена хаçачĕ хăй те аппаратри çитменлĕхсене уççăн, хăйулăн, çын камне-мĕнне пăхмасăр критиклеме хăраççĕ. Уççăн критиклесен учрежденин руководителĕ хăйсене хĕсĕрлессинчен именкеленеççĕ пулас. Çавăнпа та хаçатра местком председателĕ **Колпаков** тата ревизор **Хримли** йулташсемсĕр пуçне ытти корреспондентсем хăйсен чăн-чăн хушаматне кăтартса çырман. Кунта боњшевикла самокритикăна хисепе хуманнине хаçатăн умстатйинчен те лайăх курма пулать. Хаçат **„Парти Чăваш облăç организацин XIX-мĕш конференцин решенисене боњшевикла пурнăçлар"** йатлă умстатйапа тухнă. Умстатйара парти Чăваш Обкомĕн кивĕ руководствин политикăлла пысăк йăнăшĕ çинчен, республикăра тăшмансен сăтăрла ĕçĕсене пĕтересси начар пыни çинчен нумай çырнă. Анчах Йустици Халăх Комиссариатĕнчи, Прокуратурăри тата Верховнăй судри ĕçсем патне çитсен хаçат аппаратри пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсене пачах курми пулса тăнă.

Йустици Халăх Комиссариатĕнче çеç мар, ытти комиссариатсенчи стена хаçачĕсем те аппаратри çитменлĕхсене уççăн критиклеме хăраççĕ. Çакăн пек, Финанс Халăх Комиссариатĕнчи **„Финработник"** хаçат та **„Свой"**, **„Сердитый"**, **„Курсанты"**, **„Св."**, **„Наблюдающий"** т. ыт. çавнашкал палла мар автăрсем çырнипе тухать. Мĕншĕн çапла-ха? Кун пирки пĕр корреспондент çапла каласа парать: „Епĕ комсомол комитечĕн çекретарĕ Çеменăв йулташ çинчен статйа çыртăм. Анчах хамăн йата уççăн кăтартма хăрарăм. Мĕншĕн тесен, Финанс Халăх Комиссариатĕнче ларнă тăшмансем Лаврентйĕвпа Кокарĕв стена хаçачĕ çине критикăлă статйасем çырнăшăн пире хытă хĕсĕрленĕ. Çак йăла халĕ те пур-ха. Çавăнпа та аппаратри çитменлĕхсем çинчен хаçат çине уççăн çырма хăратăп". Çакăн пекех редколлегине статйа йе заметкă панă кашни сотрудник тенĕ пекех: **„манăн чăн хушамата ан кăтарт,"** тесе вăрттăн хушаматсемпе çыраççĕ.

Çак икĕ стена хаçачĕн примерĕ вăл халăх комиссариачĕсенче критикăпа самокритикă вăйсăрри çинчен уççăн кăтартса парать. Халăх тăшманĕсем самокритикăна пусарса, хăйсен сăтăрла ĕçне тунă. Анчах тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес пулсан самокритикăпа критикăна нихçанхинчен анлăн сарса йамала. Çакна тума хушать Чăваш облăçри XIX-мĕш парторганизацин конференцин решенийĕ. Парторганизацисен çакна йаланах асра тытса ĕçлемеле, стена хаçачĕсем критикăпа самокритикăн вăйлă хĕçпăшалĕ пулса тăнине ăнланса илмеле. Йустици Халăх Комиссариатĕнчи тата Финанс Халăх Комиссариатĕнчи пуçламĕш парторганизацисем çакна пурнăçа кĕртеймен-ха.

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарас умĕн

31 пуçламĕш организаци пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ

ТĂВАЙ. Комсомол 20 çул тултарнă йатпа Тăвай районĕнчи комсомолĕцсемпе сойузра тăман çамрăксем социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса йачĕç. Районра пурĕ 31 пуçламĕш организаци пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

„Искра Ильича" колхоз председателне Банифатйĕв йулташа, обйазательствăсене лайăх пурнăçа кĕртсе пынăшăн, районри хисеп хăми çине кĕртрĕç. Унăн колхозĕ пур йĕнĕпе те малти вырăна тухрĕ.

„Çĕнĕ çул" колхозри бригадир-комсомолĕц Н. Иванов та хăй çине илнĕ обйазательствăсене лайăх пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл хăйĕн бригадине колхозра малти вырăна кăларчĕ. Ку колхозри 4 çамрăк комсомол ретне кĕрсе, йубилей йачĕпе Канаш—Шупашкар чукун çулĕ çине ĕçлеме кайрĕç.

Нумай пуçламĕш организацисем йулашки вăхăтра политвĕренÿ ĕçне чылай лайăхлатрĕç. Районра политграмăтă кружокĕсем 33, ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренме 12 кружок организациленĕ. Хаљ вăл кружоксем парти историне тарăнăн вĕренме хатĕрленеççĕ.

В. Ињйин.

Выстăвкă пулать

Ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă йатпа Йетĕрнери педагогикă училишчинче „Подарок матери-родине" йатлă выстăвкă организациленме йышăннă. Выстăвкăра 215 експонат ытла пулмала. Унта—студентсен алњбомĕсем, калавĕсемпе сăввисем, модељсем, вĕренÿ пахалăхне кăтартакан сводкăсем тата ыт. пулаççĕ.

П. Кољушкин.

Ăнлантару ĕçĕ çук

КУСЛАВККА. 1939 çулти йанвар уйăхĕнче пулакан Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне хатĕрленес тĕлĕшпе, районра 4 перепиç пайĕ, 16 инструктăрсен участки тата 69 счотчиксен участки уйăрса хунă. Кусемсĕр пуçне районри учрежденисенче счотчиксен участки 6, станцăсемпе разйездсенче 3 счотчиксен участки уйăрса хунă.

Куславкка районĕн Мускавран Новосибирскăна каймалла тухнă 72-мĕш номĕрлĕ пассажирский пуйăс çинче перепиç туса ирттермеле. Кунта валњи 55 счотчик уйăрнă.

Перепиç вăхăтĕнче ĕçлекен кадрсене хатĕрлесе çитернĕ. Районĕпе пурĕ 138 счотчик, 32 инструктăр тата перепиçре ĕçлеме запаслă 20 çынна уйăрса райĕçтăвком президиумĕнче çирĕплетнĕ. Перепиçе лайăх хатĕрленсе пырас тĕлĕшпе 33 йалсоветĕнче халăха перепиç çинчен ăнлантарса пама бригадăсем организациленĕ. Анчах çак ĕçсене йĕркеленĕ пулсан та, йалсоветсенче перепиçе хатĕрленес тĕлĕшпе докладсемпе калаçусем сахал ирттереççĕ. Партипе комсомол организацисем перепиç ирттерме уйăрса хунă çынсене пулăшу парса пымаççĕ.

А. Зайцĕв.

Ирттерсе тултарнă

Шуркка йалĕнчи (Шупашкар р.) Чапайĕв йачĕпе тăракан промартел çентăбĕр уйăхĕнче чăпта çапмали плана 330 процент таран тултарчĕ.

И. Виноградăв.

Испанири фронтсенче

(Вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Республикă дивизийĕсем Ебро фронтĕнче ăнăçлăн наступлени туса пынипе пуçарулăха пăлхавçăсемпе интервентсен аллинчен туртса илчĕç. Испани республикĕн çарĕ çав пуçарулăха икĕ уйăх хушши ĕнтĕ хăйĕн аллисенче тытса тăрать.

Ебро йуханшывĕн анат вĕçĕнче, ыран ийулĕн 25-мĕш тенĕ чух çĕрле, шыв урлă калама çук чаплăн каçса, республиканĕçсем кĕтмен çĕртен пырса çапнипе унта пулнă пăлхавçăсемпе интервентсен чаçĕсене морањ тĕлĕшĕнчен йалтах аркатса йачĕç. Малтанхи 7 кун хушши наступлени туса республикă çарĕсем 35 километр малала куçрĕç, фронтăн 45 километр хушши тăсăлакан çĕнĕ линине турĕç. Республиканĕçсен малти линийĕсем тÿрех Гандесă хули патне çывхарса пычĕç, çулсен тĕп узĕлне тата Ебро йуханшывĕн анат вĕçĕнче интервентсен тĕп тĕрекне хăрушлăх умне кăларса тăратрĕç. Ебро фронтĕнче республиканĕçсем малтанхи ернере наступлени тунă чухне фашиссен çухатăвĕсем, тыткăна илнисене тата вĕлернисемпе амантнисене ушкăнĕпе илсен, 15 пин çынна йахăн çитнĕ.

Фашисла интервентсен, хăйсене йалтах çĕмĕрсе тăкассинчен сăлăнса йулас тесе, Левант фронтĕнчен Ебро йуханшыв районне ирĕксĕрех Италин чи лайăх тăвата дивизине, пит нумай артиллери, авиаци, çавăн пекех тата Мароккăран илсе килнĕ чаççене васкавлăн куçарма тивнĕ. Фашиссен Левант фронтĕнче Валенçи йеннеле наступлени туса пырассине çийĕнчех чарса лартмала пулнă.

Унтанпа икĕ уйăх иртрĕ, çав вăхăт хушшинче Ебро тăрăхĕнче татти-сыпписĕр çапăçусем пулса пычĕç, кунта республиканĕçсем пăлхавçăсемпе интервентсен мĕнпур контратакисене паттăрăн сирсе пычĕç, хаљ те сирсе пыраççĕ.

Çĕнĕ позицисем çинче çирĕппĕн тĕрекленсе ларса, Ебро фронтĕнче республиканĕçсем хăйсен умне лартнă задачăна пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕртрĕç; вĕсен задачи — Левант фронтĕнчен пăлхавçăсемпе интервентсен вăйне хăйсем патне куçарттарса, Левант фронтĕнче фашиссен наступленине чарса лартасси тата Ебро йуханшывĕ патĕнче республиканĕçсем чаплă наступлени туса çапăçса илнĕ территорине тăшман çĕнĕрен йышăнма хăтланса пăхсан, тимлĕн хирĕç тăрса тăшманăн чĕрĕ вăйне çĕмĕрсе тăкасси пулнă.

Ебро фронтĕнче икĕ уйăх хушши татти-сыпписĕр тата ним усăсăр пулса пынă контратакăсем вăхăтĕнче пăлхавçăсемпе интервентсен вуншар пин çын вилсе йе аманса пĕтрĕç. Республиканĕçсем хăйсен хĕçпăшалĕпе фашиссене батањйонĕ-батањйонĕпе пĕтерсе тăкрĕç. Вĕсем тăшманăн чылай бригадисене тата çавăн пекех дивизийĕсене те йалтах пĕтерсе хучĕç. Хĕçпăшал техники тĕлĕшĕнчен республиканĕçсенчен чылай малта тăраççĕ пулсан та, интервентсем хăйсен контратакисемпе нимĕнле çитĕнÿ те тăваймарĕç. Пăлхавçăсен тылĕнчи госпитањсем аманнă салтаксемпе тулса ларнă.

Йулашки вăхăтра республикă авиацийĕ интервентсене тивĕçлĕ отпор парать. Республикă љотчикĕсемпе зенитчĕкĕсем хаљхи вăхăтра Итали—Германи интервенчĕсен авиацине калама çук пысăк çухатусем кÿреççĕ. Августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 26-мĕшне çитиччен вĕсем фашиссен 93 самољотне пĕтерсе хунă (1937 çулта пĕтĕмпе фашиссен 293 самољотне персе антарнă пулнă), республикă авиацийĕ çав вăхăт хушшинче 18 самољот кăна çухатнă. Ебро фронтĕнче октăбĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 8-мĕшне çитиччен республиканĕçсем Итали—Германи интервенчĕсен 18 бомбардировщикĕсемпе истребителсене персе антарнă, хăйсем виçĕ истребител çеç çухатнă.

Ебро фронтĕнче çыхланса ларнипе тата хăйсен суйласа илнĕ чи лайăх чаçĕсене ирĕксĕрех кунта вăйсăрлатса хăварма тивнипе, пăлхавçăсемпе интервентсем Испанин ытти фрончĕсенче палăрса тăмалах операцисем тăваймаççĕ.

Республиканĕçсен активлăхĕ ытти фронтсенче те ÿссе пырать. Август уйăхĕн пуçламĕшĕнчех ĕнтĕ республиканĕçсем Ањбаррасин сăрчĕсем çинче чылай йалсемпе чи кирлĕ высотасене йышăнса илчĕç, хĕвеланăç йенчен Теруел патне чылай куçса пычĕç тата Теруел районĕнче пăлхавçăсен тылри çулĕсене касса татассипе хăратса тăраççĕ.

Çавăн пекех республиканĕçсем Левант фронтĕнче те хăйсен позицийĕсене лайăхлатма тата Сагунто—Теруел çулĕ тăрăх çурçĕр-хĕвеланăç йеннеле малала куçма пултарчĕç. Йулашки кунсенче Испанин оборонă министерствин оперативлă сводкисем республиканĕçсем Центрти фронтăн хăшпĕр участкисенче ăнăçлăн наступлени туни çинчен пĕлтереççĕ, уйрăмăн илсен, республиканĕçсем Гвадаррамă сăрчĕсем çинче хăйсен малти линийĕсене малала куçарнă (Мадридран çурçĕр-хĕвеланăç йеннеле). Мадридран кăнтăр йенчи фронтра та республиканĕçсем пăлхавçăсене пĕр километр кайала хĕссе чакарса, Толедо йеннеле çĕнĕ позицисем йышăннă.

Центрти фронтăн Естремадурă участкинче август уйăхĕн вĕçĕнче интервентсем Ањмаден çине наступлени туса пăхрĕç; кунта ртуть тупмали пит пуйан вырăнсем пур, вĕсем тĕнчипе пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Итали—Германи интервенчĕсем мĕн вăрçă пуçланнăранпах ртуть тупмали çак вырăнсем çинеле тимлĕн туртăнаççĕ. Анчах республикă çарĕн чаçĕсемпе Ањманден шахтисенчи рабочисем Ањмадене туртса илес тĕлĕшпе туса ирттерекен мĕнпур хăтланăвĕсене те икĕ çул хушши ĕнтĕ сирсе-сирсе пычĕç. Вĕсен хаљхи çĕнĕ наступленине те республиканĕçсем çентăбĕр уйăхĕн пуçламĕшĕнчех çĕмĕрсе тăкрĕç, тата тапăнса пыракан фашисла бандăсене республиканĕçсем калама çук пысăк çухатусем кÿчĕç тата пит нумай çынна тыткăна илчĕç, тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем туртса илчĕç.

Икĕ çул хушши ытла тăсăлакан вăрçă республикăлă Испанин халăх çарне хăватлă вăй туса пиçĕхтерчĕ, вăл вăй Испанири пăлхавçăсен генерањски йытă кĕтĕвĕпе икĕ вăйлă фашисла государствăсен—Италипе Германин оккупацилĕ çарĕсем тапăнса кĕнине паттăр та ăнăçлăн хирĕç тăрать. Тара кĕрĕшнĕ фашисла бандăсен хĕçпăшал техники малта тăнине хирĕç—республикăлă Испани хăйĕн халăх фрончĕн пĕрлĕхĕпе, пĕтĕçÿлĕхĕпе тата хăйĕн боецĕсен иксĕлми героисăмĕпе тăрать, вăл боецсем республикăлă тăван çĕршыв пурнăçне, вăл никама пăхăнмасăр ирĕклĕ пурăнассине хÿтлеççĕ.

Республикăлă Испанире

Республикăлă Испанири хĕрарăмсем çĕршывăн оборонă промышлĕннăçĕнче пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мадрид хулинчи патронсем тăвакан савăт цехĕсенчен пĕринче хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

(„Пресскăише").

„Родина“ самолет екипажĕ Хабаровскра

Октябрĕн 17-мĕшĕнче Хабаровскри ĕççыннисем „Родина“ самолетăн мухтавлă екипажне—Гризодубăва, Осипенко тата Раскова йулташсене пысăк хаваспа кĕтсе илнĕ. Екипаж Комсомольск хулинчен пăрахутпа пынă.

Свобода плошчĕдĕнче çĕр пин çынлă митинг пулса иртнĕ, вăл митинга Гризодубăва, Осипенко тата Раскова йулташсем кĕске салампа тухса калаçнă.

Митинга пухăннисем çав тери пысăк çĕкленупе Сталин тата Ворошилăв йулташсем патне саламсем йана йышăннă.

Çав кунхех каçхине геройня-летчицăсем Хабаровск хулинчи партипе совет активĕпе тата Иккĕмĕш Уйрăм Хĕрлĕ Йалавлă çар представителĕсемпе тĕл пулса калаçнă.

* * *

„Союзкинохроника“ „Родина“ самолетăн паттăр екипажĕ çинчен уйрăм кино каларма хатĕрленет. Вăл фильмра героиня-летчицăсен пĕтĕм çулне—Кербирен Хабаровска çити, вĕсене Хабаровскра кĕтсе илнине, Хĕрлĕ Çар çуртĕнче пулса иртнĕ чаплă ларăва укерессĕ.

Гризодубăва, Осипенко, Раскова йулташсен самахĕсене пленка çине сырса илнĕ. „Союзкинохроника“ бригади Мускава килме летчицăсемпе пĕрле тухса, çул çинче летчицăсене кĕтсе илнисене Хĕрлĕ столицăна çитичченех кино çине укерсе пырассĕ.

(ТАСС).

Коммуниссем паха примерсем кăтартассĕ

Мускаври станоксем туса каларакан „Красный пролетарий“ саватри коммуниссем Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртура малта пыраççĕ. Саватра социалисăмлă ăмăртăва пуçарса йана коммуниссем—Рйаполăв, Рупасăв тата Мамызин йулташсем ĕçĕн паха примерĕсене кăтартса пыраççĕ. Вĕсем тăрашнипе хăйсен бригадинчи рабочисене пурне те стаханăвла ĕçлекенсем тунă.

Коммунис-стаханăвĕçсем Байушкин, Помогайĕв йулташсем çентябĕр уйăхĕнче икшер нормă тултарнă. Хальте вĕсем ĕçĕн пысăк тухăçлăхне кăтартса ĕçлеççĕ, нормăна уптан та ытларах тултарса пыраççĕ.

Производствăри командирсемпе коммуниссем çĕнĕ стаханăвĕçсене ÿстерсе пыраççĕ, кайа йулакансене малти рете тухма пулăшаççĕ.

Çакăн пек коммуниссем кăтартса пыракан паха примерсем вăйĕ.

(ТАСС).

Германин Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсенчи шпионла центрĕ пирки пыракан процес

Икĕ ерне перерыв тунă хыççăн, Германин Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсенчи шпионла центрĕ пирки суд процесĕ çĕнĕрен пуçланнă. Прокурор Гарди хăй самахĕнче çапла каланă: „шпионла загăвăра Германирен задани панă тăрăх организациленĕ тата загăвăрщиксем руководства çавăнтан илсе тăнă“. Шпионла центр Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсенче çĕршыв обороне мĕнли çинчен, çыранри артиллери çинчен калакан сведĕнисем пухса вĕсене Германие йарса тăнă, çавăн пекех тата йана Атлантикă çыранĕ çинчи оборона планне тата икĕ çĕнĕ авианосец чертежĕсене вăрлама задани панă пулнă. Çав чертежсене илес шутпа шпионсем Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсен президенчĕн Рузвельтăн алпусăмне тунă. Малала прокурор çапла каланă: айăпланакансенчен иккĕшĕ, хальте Германире пурăнакансем, Германи çар министерствин пысăк вырăнта ларакан чиновникĕсем пулса тăраççĕ. Германи разведки Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсенче шпионсене авиаци предприйатийĕсенче, çар савăчĕсенче, карапсем тăвакан верфсенче те. ыт. çĕрте те пухнă.

Америкăри пĕтĕм пичет çак процес çинчен калама çук нумай çырать. Германи правительстви шпионла центра çыхăнса тăнине хăçантсем уйрăмах палла тăвассĕ.

(ТАСС).

Испанири троцкисла-фашисла бандă ĕçĕ пирки пыракан процес

Барселонăра, ПОУМ текен троцкисла-фашисла бандă ĕçĕ пирки пыракан суд процесĕнче октябĕрĕн 17—18-мĕшсенче свидетелĕсен кăтартса панисене итленĕ. Çакна палăртнă: Хĕвелтухăç фронтĕнчи дивизисенчен пĕринче 1937 çулта поумăвĕçсенчен тăнă командовани республика тылĕнчи фашисла вăрттăн организацисемпе çыхăс туслă пулнă, фронтăн леш йенчи фашиссемпе тачă çыхăнса тăнă. Фашиссен кăтартăвĕ тăрăх 1937 çулти майă пуçламĕшĕнче ПОУМ пуçлăхĕсем фашиссемшĕн фронта уçса панă, çакăн умĕн вĕсем дивизи штабĕн начальникне вĕлернĕ, мĕншĕн тесен вăл начальник измена тума хатĕрленнине пĕлнĕ, анчах вăл çав измена майлă тăман. Италипе Германи интервенчĕсем хăйсен агĕнчĕсене—поумăвĕçсене нумай укçа-тенкĕ парса тăнă. Республикăна хирĕç восстани çĕклесе, поумăвĕçсем хăйсене хĕçпăшалсăрлантарнисене бандитла террорсем туса пынă.

Защита свидетелĕ—министрсен совечĕн председателĕ пулнă Кабальеро çакна йышăннă: ПОУМ-а салатса йама ыйтсан, Кабальеро ăна салатса йама килĕшмен.

(ТАСС).

Кантона сыхлама хатĕрленни

Гоминдан чĕнсе калани

Йапони çарĕ Кăнтăр Китайа тапăнса кĕнĕ майпа, Гоминдан Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Гуандун провинцинчи халăхпа çара чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

„Центр Китайра калама çук пысăк тăкаксем туса,—тенĕ чĕнуре,—халăх вăхăтра йапонĕçсем Кăнтăр Китайа тапăнса кĕреççĕ, вĕсем хăйсен Йанцзы фронтĕнчи ăнăçсăр кĕрешĕвĕн картинне сирсе йарасшăн. Гуандунри çар тата халăх Йапони генералĕсене хирĕç хăйулăн та вăйлăн тăрĕç, кун пирки иккĕленмелли çук.

Ухçăнах куранса тăрат, йапонĕçсем Кăнтăр Китай çине пырса тапăнни вăл—Йапони милитарисĕсем шанчăка çухатнипе тăвакан йулашки ĕç пулса тăрат.

Гуандун—Китайри революци пуçланса кайнă çĕршыв, Кантон халăхĕн кĕрешĕвĕ Китай историне нумай чаплă страницăсем çырса хунă. Кантон халăхĕн лайăх организацийĕсем çинчен, вăл пĕрлĕхлĕ пулни çинчен, вăл захватчиксене хайар накасăн пама хатĕр тăни çинчен тĕп правительстви пĕлет. Гуандунра пуçса тăнă лару-тăрăва май тĕп правительстви тĕплĕн хатĕрленсе кирлĕ ĕçсем тăват. Гуандун провинцинчи пĕтĕм халăх, пĕтĕм салтаксем захватчиксене хирĕç пĕрлĕхлĕн тăрĕç, хăйсен революцийĕн задачине пурнăçа кĕртеççĕ, тесе шанса тăрат правительство“.

* * *

Хула оборонине организацилеме Кантона генерал Бей Цзун-си пынă. Вăл провинцийе Гуансирен 100 пинлĕ çар илсе пынă. Кантонра çар ĕçне вĕренме халăхран нумай самооборонă отрйачĕсем организацилесе çитереççĕ.

(ТАСС).

Фашисла авиацин Испанири çухатăвĕсем

Çентябĕрĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче тата октябĕрĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнче Италипе Германи авиацийĕ Испанири фронтсенче 67 самолет çухатнă, çав вăхăтрах республикă авиацийĕн пурĕ те 11 самолет çеç пĕтнĕ.

Çентябĕрĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче республиканĕçсем фашиссен 24 истребителĕне 4 бомбардировщикне персе антарнă. Октябĕрĕн пĕрремĕш çуруйăхĕнче республиканĕçсем фашиссен 37 истребителĕне 6 бомбардировщикне персе антарнă.

(ТАСС).



Одессăри киностуди „Морской пост“ йатлă çĕнĕ художествăлă фильм укерсе пĕтерет. Фильм—Инсет-Хĕвелтухăçĕнчи пограничниксем чарусăрланса кайнă Йапони военщинипе паттăрăн кĕрешнине кăтартса парат. Сценари авторĕ—Лев Линьков, режиссер—Владимир Гончуков, оператор—Г. Шабанăв.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: фильмран илнĕ кадр (сылтăмран сулахайала): арĕсленĕскер Федăр Бурăв (артист И. Йудин), старшина Матвейĕв (артист Н. Ивакин) тата краснофлотĕц Бочкарев (артист В. Лудвинский).

(Союзфото).

Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту

Пирĕн ăмăрту

Пирĕн республика касал йалхуçалăх ĕçĕсене пурне те вăхăтра, тирпейлĕ тата тухăçлă тăвассишĕн хамăрпа йунашар республикăсемпе—Тутар тата Мордва республикĕсемпе ăмăртса ĕçлесе пырат. Çав майпа пирĕн Елĕк районĕ те Трак районĕпе ăмăрту договăрĕ тунă.

Социалисăмлă ăмăрту йалхуçалăх ĕçĕсене анăçлăн туса пырассине пире нумай пулăшрĕ. Тырпула кĕске вăхăтра пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕтĕмĕр. Колхозсем чылайĕшĕ аван çапса пĕтереççĕ. 126 колхозран 26 колхоз аван çапса пĕтереймен. Районĕпе аван çапмали хисепрен 94 процент çапса илнĕ.

Анчах хăшпĕр ĕçсем пирĕн халĕ те йулса пыраççĕ-ха. Клевĕр çапассине 60 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ. Колхозсем çĕртме сухине 70 процент кăна тунă. Çаксем вĕсем Елĕк районĕн пысăк çитменлĕхĕсем. Ку çитменлĕхсене пĕтерес майпа çак кунсенче йалсовет тата колхоз председателĕсен канашлуне туса иртернĕ. Канашлăва килнĕ çынсем ку тĕлĕшпе татăклă обйазательствăсем илчĕç.

Кĕрхи çĕртмене туса пĕтерме пур условисем те пур. Лашасем çителĕклĕ, вĕсемпе усă курма пĕлни çеç кирлĕ.

Йалсовет тата колхоз председателĕсем чылайĕшĕ ăмăртура хăйсен хастарлăхне, пултарулăхне кăтартаççĕ. Йалсовет председателĕсем: Захарăв (Крымзарайкă), Соколов (Башшевск), Крылов (Атмен) пур ĕçсене те тăрăшса тăваççĕ. Вĕсем уйхир ĕçĕсене тирпейлĕ тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсен кĕрхи çĕртмене туса пĕтернĕ. Ытти хуçалăх ĕçĕсемпе те кайра мар, Шупашкарпа Канаш хушшинчи чукунçул тăвас ĕçе те вĕсем вăйлăн хутшăнчĕç. Укçа-тенкĕ пухас плансене те анăçлăн тултарса пыраççĕ.

Çавăн пекех тата колхоз председателĕсенчен Федăрăв (Вăрманкасси), Афанасйĕв (Кив Уй), Максимăв (Александровский колхозĕ), Петрикăв (Синер) йулташсем йалхуçалăх ĕçĕсене аван вĕçлерĕç—тырпула лайăх пухса кĕчĕç. Аван çапса пĕтернĕ, патшалăха тырă парса татнă. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх укçа валеçсе параççĕ. Ку колхозсен парăмсене (улма, сĕт-кантăр, аш-какай, укçа-тенкĕ т. ыт. те) пурне те парса татнă. Çĕртме сухи туса пĕтернĕ.

Районра çакăн пек лайăх ĕçлекен, партипе правительствă кăтартнă ĕçсене пурнăça кĕртессишĕн кĕрешекен йалсовет председателĕсемпе колхоз председателĕсем сахал мар.

Анчах ăмăртура района кайала туртса пыракансем те пур-ха. Мăн-Вылă йалсовет председателĕ Михайлăв йулташ çĕртме сухи тăвассипе интересленмест. Унăн йалсоветĕнче çĕртме сухи мĕн пурĕ те 14 гектар çинче çеç тунă. Мăн-Вылă колхоз председателĕ пур ĕçсем çинчен те манса кайнă, колхоз ĕçĕсемшĕн çунмасть.

Раскилдинă йалсоветĕ колхозсене йертсе пыраймасть. Йалсовет председателĕ Антонăв: „мана колхоз председателĕсем илтмеççĕ“, тесе ларать. Кунта йалсовет—вăл йалти влаç органĕ пулса тăнине, йалсоветĕн тивĕçлĕхне маннă. Çакăн пек йĕркесĕрлĕхе халех пĕтерес пулать, массă хушшинче ăнлантару ĕçне сарни кирлĕ.

Раскилдинă колхоз председателĕ Йемельйанăв йулташ кайа йулнă шухăшсем хыççăн кайать. Илйанкинă, Шарипкă тата ытти йунашар колхозсенче çĕртме сухи туса пĕтерессĕ пулин те, Йемельйанăв йулташ халĕ те: „Çĕр хытă, çĕртме туйма май çук“, тесе ларать.

Йалсоветсен колхозсен куллен йертсе пыни кирлĕ. Колхозăн пур ĕçĕсене те анăçлăн вĕçлессишĕн кĕрешес ĕçе йалсоветсен пуçарса пулать. Ку ĕçре тĕп мессел—ăмăрту пулмала. Октябĕр уйавне хатĕрленнĕ май, йалсоветсен, колхозсен массă хушшинче социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарас пулать.

Т. П. Куликов.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ-орденоносец.

Рабочисен хастарлăхĕ пысăк

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан саватри рабочисен кашниннех Октябĕр уйавĕнчен ĕçре çĕнтерусем, кăтартусем тăвас хастарлăх çав тери пысăк. Скачкова йулташ йертсе пыракан бригада çентябĕр уйăх планне 130,8 процент, Окуль йулташ йертсе пыракан цех—134,8 процент тултарнă. Уйрăм стаханăвĕçсем çентябĕрте тата лайăхрах тĕслĕхсем кăтартнă. Акă Скачкова йулташ уйăх планне 214,7 процент, Павлăв—168,7 процент, Кислова 199,9 процент, касса хатĕрлекен цехри Шаронăва йулташ—174,2 процент, Иванова 175,7 процент, Йефимăва 214,7 процент тултарнă. Нормăна тултарса ĕçлейменнисен хисепĕ саватра çукпа пĕрех.

Рабочисемпе работницăсем çентябĕрти ĕçсене сипĕлесе тăвас [illegible] октябĕрĕн 15-мĕшĕнче Н. Павлăв: йулташ плана—218,5 процент, Иванова—208,5 процент, Кожандайĕва—219,7 процент, Казаков—276 процент тултарчĕ.

Анчах çакна каламала: саватра йаланах лайăх ĕçлесе пыма рабочисене пур кирлĕ майсене те туса паман-ха. Çитменлĕхсенчен уйрăмах, чĕр тавар тата енерги кирлĕ пек парса тăманнине палăртмала. Çавсем çитмен пирки хăшпĕр кун чылай вăхăт хушши простой пулать. Тĕслĕхрен, октябĕрĕн 15-мĕшнех илер. Ку кун ытти чухне икшер нормă ытла тултарса ĕçлекенсем (Кислова, Кожандайĕва, Моисейĕв, Йефимăва т. ыт. те) нормăсене арак-аран тултарнă.

Саватă руководителĕсен çитменлĕхсене пĕтерессипе тимлĕн ĕçлени кирлĕ, анчах пайанхи куна [illegible].

Н. Федăрăв.

Çĕнĕ кĕнекесем

Илемлĕ литература йĕнĕпе Чăвашсен Государствă издательствинче çак кунсенче çакăн пек çĕнĕ кĕнекесем пичетленсе тухнă:

М. Н. Чалдун—„Çулăм витĕр“, калавсен сборникĕ;

П. Н. Осипăв—„Кулленхи симфони“, пилĕк пайлă пйеса;

Иван Малгай—„Савăсем“, çамрăк поетăн йулашки вăхăтри савăсен сборникĕ.

Виçĕ кĕнеки те хытă хуплашкала тата лайăх хут çинче пичетленнĕ.

Двигăтĕле ĕçе йанă

Тăрмăшри (Йелчĕк р.) „Çĕнĕ çул“ колхозра 12 лаша вăйлĕ двигăтĕл пилĕк çул хушши ĕçлемесĕр ларчĕ. Халĕ çак двигăтĕлпе тырă авăртнă çĕрте усă курма пуçларĕç.

Колхоз арманĕ кашни кунах 500-шер пăт тырă авăртат, кунта кĕршĕри йалсенчен те авăртма нумай килеççĕ. Двигăтĕл колхоза пысăк тупăш парат.

Ф. Беляйĕв.

Пулни-иртнисем

Шупашкарти „Заготзерно“ пунктĕнчи приймшчик И. М. Миронăв (Шупашкар районĕнчи Патирек йалĕсем) Е. Иванована, вăл хăйĕн обйазательстви тăрăх государствăна 65 килограм ыраш панă, тесе суйă квитанци çырса панă, çав вăхăтрах Иванова пĕр килограм та тырă паман пулнă. Çакăн пек квитанцийĕн Иванова Миронăва 30 тенкĕ парасшăн пулнă.

Халĕ ку ултавлă ĕçе тырă шыв çине кăларнă. Çавăн пек суйă квитанцисене вăл Иванована çеç мар сырса панă. Миронăв жулике ĕçрен кăларса суда панă.

Çĕнĕ лавка турĕç

ÇЕРПУ. Ивановски йалпо çумĕнче çĕнĕ магазин турĕç. Магазина тума 15 пин тенке ларчĕ. Халĕ магазинра сахăр, супăнь, спичкă, тапаксем, пируссем, хĕлле тăхăнмали тумтирсем сутаççĕ. Продавец Иванов йулташ квартал планне ытлашшипех тултарассишĕн тăрăшат.

Н. Окулов.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

КАНАШ—ШУПАШКАР Чукунçул строительстви Управленийĕ

чукунçулпа вăхăтлă усă курнă вăхăтра план тата тариф тума Чăваш республикинчи мĕн пур учрежденисенчен, предприйатисенчен тата хуçалăх организацийĕсенчен Канаш—Шупашкар чукунçулĕ тăрăх 1938 çулти IV-ш квартала тата 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшне майăн пĕреххи хушшинче, грузсем турттармали çинчен уйăхсем тата кварталсем тăрăх кăтартса, касалхи октябĕрĕн 25-мĕшĕнчен кайа мар заявкăсем пама ыйтат.

Чукунçул строительстви Управленийĕ.

2—2

„Союзутиль“

6×7 метр висеслĕ

икĕ çĕнĕ пура сутат.

Çак адрĕспе ыйтса пĕлмеле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 3, „Союзутиль“.

2—2

Халăха пĕлсе тăма

Шупашкар хулинче Спортивнăй урамра 3-мĕш номĕрлĕ суртра (Карл Маркс урамĕн кĕтĕсĕ, Пожарнăй команда пĕр кварталăсулерех)

хулари иккĕмĕш аптекă усă.

Вăл аптекă врачсем панă рецептсем тăрăх емелсем хатĕрлет тата тĕрлĕрен аптекă таварсем, чирлисене пăхмалли хапаласем, сыхса йамалли хатĕрсем тата санитарипе гигийенă таварĕсем сутат.

Çĕнĕ аптекăн кирлĕ таварсем çителĕклĕ тата унта квалификацийĕлĕ фармацевтсем ĕçлеççĕ.

Чăваш аптекоуправлени хулăн çĕнĕ пайĕнче пурăнакан мĕн пур гражданĕсене 2-мĕш аптекăпа усă курма ыйтат.

Аптекă кашнах кунсерен пуçне кашни кунах ирхине 9 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен ĕçлет.

Çĕнĕ аптекăпа усă курăр!

Чăвашаптекоуправлени.

2—2

Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕн

РАСПОРЙАЖЕНИЙĔ

Йулашки вăхăтра Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕн Госавтоинспекцийĕ автотранспорт експлоатаци йĕркине пăссa, автомобилсен номĕр паллисене çухатнине тата номĕрсене пĕр машинă çинчен тепĕр машинă çине куçарса çакнине темиçе те палăртнă.

Кунсăр пуçне, автохуçалăхсем номĕр паллисене тата техникăлă паспăртсене çухатни çинчен вăхăтра пĕлтерменнипе преступнăй елементсене ултавлă ĕçсем тăвас ĕçре вăл паллăсемпе усă курма май парат.

Çулте кăтартнă фактсем тăрăх Чăваш АССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕ мĕнпур автохуçалăхсене çакăн пек хушат:

1. Автомобил номĕрĕсене çирĕп çыпăçтарасси тата ăна йусавлă тытасси çине çавăрăнса пăхмала.

2. Авто-мото-машинăн номĕрĕ йе техникăлă паспăрчĕ çухалсан пĕр тăхтамасăр Госавтоинспекцине тата милици уйрăмне пĕлтермеле.

3. Мĕн пур грузовиксем çине (машинăн висĕ йенне те) обйазательнă шурă сăрпа, вăл машинăна панă номĕре çак висеспе (миллиметрпа) çырмала (тĕслĕхрен, ЧА 09—53):

Çулĕшĕ		Сарлакăшĕ		Штрих сарлакăшĕ		Тире		Хушă сарлакăшĕ		
Саспаллисен	Цифрăсен	Саспаллисен	Цифрăсен	Саспаллисен	Цифрăсен	Урлăшĕ	Сарлакăшĕ	Саспаллисем хушши	Саспаллисемпе цифрăсем хушши	Цифрăсем хушши
220	220	175	150	40	35	65	35	65	150	50

4. Милици уйрăмĕсен начальникĕсен, госинспектăрсен тата обшчĕствăлă автоинспектăрсен çак распорйаженийе автохуçалăхсем мĕнле пурнăçа кĕртнине контроль туса тăмала.

ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управлени начальникĕ милици капитанĕ

ДРЕНЬАСĂВ.

ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн Рабочисемпе Хресченсен Милици Управленийĕн Госавтоинспекцийĕн начальникĕ

МИЖЕРАВ.

1938 ç. октябĕрĕн 13-мĕш.

„ЧĂВАШ КОММУНĔ“ СЫРĂНСА ИЛМЕЛИ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 т. 50 пус. 3 УЙĂХА 7 т. 50 п., 6 УЙĂХА 15 т., ÇУЛТАЛĂКА 30 тенкĕ. ПОДПИСКĂНА СЫХĂНУ УЙРĂМĔСЕМ. ПИСМОНОСĔÇСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 543 Гор. Чебоксары, типографи № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793 ф. Б. 58×84 п. л.

20